Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУНЬ 3 ЕРНЕКУН 125 (4938) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать — *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ* — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйĕн 6—23

Шупашкар парторганизацин конференцийĕ

Виçемкун ПСК(б)П Шупашкар организацин IV-мĕш конференцийĕ уçăлчĕ. Конференци парторганизацин суйлавăн хушшинчи пысăк ĕçĕсене, парти Тĕпкомĕн 1937 çулти февраль-мартри пленум решенийĕсене мĕнле пурнăçланине пăхса тухать.

Парти Тĕпкомĕн февраль-мартри пленумĕ, парторганизацисене Сталинла Конституцине пурнăçа кĕртнине хăмăр çĕршывра пулса пыракан политикăлла çаврăнăва пуçĕнче пулма хушрĕ. Çакă вăл партире демократине çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалине, критикăпа самокритикăна аталантармалине, парти органĕсем парти масси умĕнче отчетлă пулмалине, партин пĕтĕм массине активлатса çитермелине пĕлтерчĕ. Çавăн пекех парти Тĕпкомĕ парти руководителĕсене, коммуниссене политикăлла сыхлăха вăйлатма, пур йышши тăшмансене—троцкиссене, бухаринецсене, буржуазлă-националиссене т. ыт. хайарран çĕмĕрсе тăкма, пĕтĕм коммуниссене парти пурнăçне активлăн хутшăнса ĕçлеме, çĕнĕ кадрсем хатĕрлесе пыма кирлĕ майсем тума, пĕтĕм хуçалăхпа политика ĕçĕнче çĕнĕ çĕкленÿ тума хушрĕ.

Шупашкар парторганизаци, пĕтĕм партипе пĕрле, Тĕпком пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртсе хăйĕн ретĕсене троцкиссенчен, бухаринецсенчен, буржуазлă националиссенчен, тата ытти тăшмансенчен тасатас, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ, партипе совет органĕсене çĕнĕ кадрсем лартса вăйлатрĕ.

Хулари пуçламăш парторганизацисен отчотпа суйлав пухăвĕсем—парти руководителĕсен ĕç пултарулăхне парти масси тĕрĕслесе тухни пулчĕ. Мĕн кăтартрĕ-ха çак тĕрĕслев?

64 пуçламăш парторганизацире йĕртсе пыракан состава кивĕ составран 56 процент суйланнă. Çакă вăл парти руководителĕсен пысăк пайĕ хăйне ĕçре кăтартнине, масса умĕнче шанăçа тухнине кăтартать. Отчотпа суйлав пухăвĕсенче суйланнă 64 парторгран 23-шĕ парти ĕçĕнче виçĕ çул ытла, 36-шĕ икшер çул ĕçлеççĕ.

Пуçламăш парторганизацисенчи суйлавсем партин пĕрлĕхĕ нихăçанхинчен те вăйлă пулнине, парти организацисем Тĕпком тавра çирĕппĕн пĕтĕçсе тăнине кăтартрĕç. Коммуниссен активлăхĕ нихăçанхинчен те ытла вăйлă. Коммуниссем пуçламăш парторганизацисен пухувĕсенче парти руководителĕсенчĕн тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене кĕске вăхăтра пĕтерме, партилĕ-политикăлла ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăнтарса пырса пĕтĕм ĕçсене çĕклентерсе йама ыйтаççĕ.

Шупашкар организаци—республикăра малта, йĕртсе пыракан организаци пулмала. Çавăнпа та унтан ыйтассине те нумайтарах ыйтаççĕ. Хула комитечĕ хăйĕн ĕçĕсем çинчен пур пуçламăш организацисенче те пекех отчот турĕ. Унăн политикăлла çулйĕрне тĕрĕс, практикăлла ĕçĕсене çителĕклĕ тесе, йышăннă. Анчах ку пĕре те хула комитечĕн ĕçĕсем пур йенчен те çителĕклĕ пулнине, йе çак çитĕнÿсем пирки лăпланса лармалине пĕлтермест.

Шупашкар комитечĕ парторганизацине тăшмансенчен тасатас тĕлĕшпе питех те пысăк ĕçсем туса ирттернĕ вăхăтрах, пысăк çитменлĕхсем, йăнăшсем туса пĕтерни пулнă. Хула комитечĕн кивĕ руководстви (Смирнов) пуçламăш парторганизацисене йăнăшсем тăвасран сыхлантарас выранне, хăй йăнăш çул çине тĕртсе пынă. Коммуниссен кунçулĕ çине çийелтен, бÿрократла пăхас йăла, чылай чухне, хула комитечĕн кивĕ составĕнчен хăйĕнчен тухнă.

Хула комитечĕ çаплах политикăлла ĕçе хуçалăх ĕçĕпе çыхăнтарса пыма вĕренсе çитеймен-ха. Илĕпĕр строительствă ĕçне. Кăçал Шупашкарта нихçан пулман пысăк строительствă ĕçĕсем пулса иртмеле. Шупашкарта чăн-чăн промышленнăç строительстви кăçалтан тин пуçланать. Партипе совет, хуçалăх руководствинче пулнă тăшманла етемсем пур майсемпе те Шупашкарта промышленнăç предприйатисем лартас ĕçе хирĕç пынă. Вĕсем промышленнăç кадрĕсем ÿстерсе çитĕнтерессинчен темрен хăранă пек хăранă. Кивĕ руководства çĕмĕрсе тăкнă хыççăн чăваш парторганизаци хĕрÿлĕн тытăннă малтанхи ĕç вăл—республикăра, уйрăмах—Шупашкарта промышленнăç предприйатисем лартас, промышленнăç кадрĕсем хатĕрлес ĕç пулчĕ. Шупашкар комитечĕн пирвайхи ĕçĕ вăл, тăшмансене çĕмĕрсе тăкнипе пĕрлех, строительствăн ĕçне кирлĕ пек йĕртсе пыма тытăнасси пулнă. Пайанхи куна хула комитечĕ çавăн пек тăват теме пултараймасть-ха. Кун çинчен Шупашкарта ĕçлекен кивĕ предприйатисем промфинплана уйăхран уйăха тултарса пымани, кун çинчен тума тытăннă суртсене 7—8 çула тăсса пыни, кун çинчен строительствă ĕçĕ тĕрме çук пайăх пыни калать. Строительствăсен пайанхи хăвартлăхсем нихăш йенчĕн хула комитечĕн ĕçĕнче çитĕнÿсен балансне кĕме пултараймаст. Çав вăхăтрах Шупашкар организацийĕпе Шупашкар большевикĕсем умĕнче Шупашкар хулине промышленнăç никĕсĕ туса хурас ыйăхран та чысла задач тăрат. Паллах, конференци çак ыйту тĕрĕх хăйĕн татăклă сăмахне каласа хăварас пулат. Унăн строительствă организацисенчен хыттăрах ыйтмалла: вĕсем тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерме кирлине саккун выранне йышăнаççĕ-и,—апла пулсан вĕсен строительствă ĕçĕнчен тăшман йĕрне нимĕн хăвармн çапса салатмала, йе, вĕсем тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерме кирлине „аллилуйа“ выранне хурса тупа тума анчах йышăнаççĕ? Строительствă организацисенче ĕçлекен коммуниссен çак ыйту пирки ответ памала конференци умĕнче. Строительствă тутаракан комиссариатсемпе учрежденисен руководителĕсене вĕсенче ĕçлекен коммуниссем те хăйсем çинчен ответлăха сирсе йама пултараймаççĕ.

Пире Сталин йулташ большевикла сыхăлăхла пулма, парти ретĕсене таса тытма, халăха тăшмансем тапăнса килме пултарассинчен сыхăлăхла тытма, мобилизацилле тытма вĕрентет. Шупашкар большевикĕсен задачĕ çак ĕçре те пĕтĕм организацисемшĕн пример пулмала, кашни савăта, предприйатине, учреждение чăннипех социализм крепăçĕ тумала. Анчах пайанхи куна Шупашкар организаци предприйатисемпе учрежденисенче оборона ĕçне, Осоавиахим ĕçне кирлĕ пек лартнă тесе мухтанма пултараймаст-ха.

Суйлав кунĕ патне таччăнах çитсе тăтăмăр. Тепĕр 3 эрне ытларахран Шупашкар хулинчи суйлавçăсем, пĕтĕм çĕршыври суйлавçăсемпе пĕрле, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама урнăсем патне пыраççĕ.

Ийунĕн 26-мĕшĕнче чăваш халăхĕ хăйĕн республикĕн аслă органне—Чăваш АССР Верховнăй Советне Сталин йулташа—пĕтĕм тĕнчери халăхсен çулпуçне, Ленинăн пирвайхи ученикне, Конституци автăрне суйлат. Çавăнпа пĕрлех, чăваш халăхĕ çак кун Чăваш АССР Верховнăй Советне Сталин йулташăн соратникĕсене — Молотăв, Калинин, Ворошилăв, Каганович, Андрейĕв, Микойан, Жданăв, Чубарь, Йежов йулташсене суйлат. Халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма килĕшÿ пани—суйлавçăсене пурне те пĕр çын йулми суйлава тухма хавхалантарат.

Парти конференцин хула организацине хула комитечĕн ĕçĕнчи пур çитменлĕхсене те большевикла палăртмала, вăл çитменлĕхсене хыттăн критиклемеле, политикăпа хуçалăх ĕçĕсенче çĕнĕрен çĕнтерÿсем тумали çулйĕре палăртса хăвармала.

Иккĕленмели çук, конференци хăйĕн ĕçĕсене анăçулă ирттерĕ, хула комитетне Ленин—Сталин парти ĕçĕнче кĕрешсе пиçĕхнĕ йулташсене суйласа хăварĕ. Конференци иртнĕ хыççăн хулари организацисенче партилĕ-политикăлла ĕçсем тата ытларах лайăхланĕç, промышленнăç предприйатисем лайăхрах ĕçлеме пуçлĕç, строительствă ĕçĕсем кирлĕ хăвăртлăхсемпе пулса пырĕç, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтересси пур организацисенче те тивĕçлĕ хăйулăхпа пулса пыма пуçлĕ,—çакна епĕр шансах тăратпăр.

Мускаври Фрунзенски суйлав округĕнчи ĕççыннисен 100 пин çынлă митингĕ

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн М. В. Фрунзе йачĕпе тăракан хĕрлĕ йалавлă Ленин орденлĕ çар Академийĕн çурчĕ умĕнчи площчĕтре ийунĕн 1-мĕшĕнче Мускаври Фрунзенски суйлав округĕнчи ĕççыннисен 100 пин çынлă митингĕ пулса иртнĕ. „Каучук“ савăтĕнчи коллектив йачĕпе çав савăтри стахановĕц И. Т. Хохлов йулташ митинга пынисене РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсен кунĕнче хăйсен сассисене партире мар большевикшăн, орденоносĕц Василий Иванович Лебедĕв—Кумач поетшăн пама чĕнсе каланă.

— Пирĕн çĕршыв,—тесе каланă Хохлов йулташ,—Лебедĕв—Кумач поета лайăх пĕлет. Пирĕн нумай нацилĕ пĕтĕм халăх вăл çырнă йурăсене, аслă Сталин çинчен, пирĕн телейлĕ пурнăç çинчен, çырнă „ĕçлеме тата пурăнма пулăшакан“ йуррисене йурлат.

Лебедĕв—Кумач йулташ кандидатуришĕн Фрунзенски районĕнчи 36-мĕш номерлĕ шкулти учител И. С. Гуцальук йулташ, Мускаври предагогикă институтĕнчи студенткă Х. Х. Черноброд йулташ тата ыт. те тухса каланă.

Чаплăн ала çупса кĕтсе илнĕскер, Лебедĕв—Кумач йулташ хăйĕн уçăмлă та илемлĕ сăмахĕнче çапла каланă:

— Манăн хĕçпăшал вăл—йурă. Маншăн, художник пулса ĕçлекен çынщăн, халăхшăн ĕçленинчен ытла, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн ĕçленинчен ытла урăх пысăк телей çук. Çакăнтан ĕнтĕ, çак çÿлĕ трибуна çинчен манăн татах çапла калас килет:

> Крепи советская наша держава!
> Радуйся, вольной земли человек!
> Ленину—слава! Сталину—слава!
> Партии—слава вовек!

Пысăк хавасланăхпа митингра пулнисем Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

(ТАСС).

Агитпойăс

ДОН-çи-РОСТОВ, ийунĕн 1-мĕш. (ТАСС). РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсене хатĕрленнĕ май, кăнтăр-хĕвелтухăç чукунçулĕн политпайĕ агитпойĕс организацилет, вăл Миллерово — Ростăв — Таганрог участкинче çÿремеле. Агитпойĕс пăссажирсемпе чукунçулçăсем хушшинче агитаципе массăлă ĕç туса ирттермеле. Пойĕс çумĕнчи вакунсенчен пĕрне суйлав çинчен вуламали, партилĕ-массăлă тата илемлĕ литератрурă тата культурă таварĕсене сутма уйăраççĕ.

Ийунĕн 26-мĕшĕ йачĕпе тунă пăравуссен колонни

ПЕРМ, ийунĕн 1-мĕш. (ТАСС). Перм станцинчи депора РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсен кунĕ ийунĕн 26-мĕшĕ йачĕпе—пăравуссен колоннине организациленĕ, колоннăра ултă пăравус. Колоннăри машиниссем—Важин, Колпаков, Микăв йулташсем тата ыт. те пăравуссене пĕр йусамасăр 25 пин километр хушши чупма обйазательствăсем илнĕ.

Мускав хулинчи парторганизацин V-мĕш конференцийĕ

Мускав хулинчи партконференцийĕн майăн 31-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕнче партин хула комитечĕпе ревизи комиççин отчотлă доклачĕсем тăрăх пренисем пынă. Пренисем идейăпа политикă тĕлĕшĕнчен çÿлĕ выранта иртсе пыраççĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиççи председателĕн заместителĕ Шкирйатăв йулташ пысăк сăмах тухса каланă. Делегатсем ăна ăшшăн кĕтсе илнĕ. Парти, Сталин йулташ йертсе пынипе, партин йертсе пырас ĕçне çĕнĕ çынсене, парти ĕçне чĕререн йуратса ĕçлекен çынсене лартас тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕç туса пыни çинчен уççăн кăтартса паракан чылай фактсемпе çирĕплетнĕ. Çав йертсе пырас ĕçе пынă çĕнĕ çынсем большевикла ĕçĕн образецĕсене кăтартаççĕ.

Майăн 31-мĕшĕнчи каçхи ларура ПСК(б)П Мускав Хула Комитечĕпе ревизи комиççин отчотлă доклачĕсем тăрăх пренисем пĕтнĕ. Пренире тухса калама 113 делегат çырăнна пулнă, вĕсенчен 47-шĕ тухса каланă.

ПСК(б)П Мускав Хула Комитет çекретарĕ Братановский йулташ тухса каланине делегатсем пысăк тимлĕхпе итленĕ.

Парти органĕсен суйлавĕсен итогĕсем çинче чарăнса тăрса, Братановский йулташ суйлавсем политикăлла пысăк активлăхпа, ĕçлĕн тата организацилĕхпе иртни çинчен палăртнă.

А. И. Угарăв йулташ йулашки сăмахпа тухса каланă чухне, делегатсем ăна хĕрÿлĕн ала çупнипе кĕтсе илнĕ.

Конференци пурте пĕр пулса çакăн пек решени йышăннă: ПСК(б) Парти Мускав Хула Комитечĕн политикăлла линине тĕрĕс тата практикăлла ĕçне çителĕклĕ тесе йышăнас. Ревизи комиççин отчотне—çирĕплетес.

Делегатсем Ленин хулинчи большевиксен V-мĕш конференцийĕн саламлă çырăвне хĕрÿлĕн кĕтсе илнĕ.

(ТАСС).

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин IV-мĕш конференцийĕ

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин IV-мĕш конференцин ĕнерхи ирхи ларăвĕнче Жукăв йулташ ПСК(б)П хула комитечĕн ревизи комиççи ĕçĕсем çинчен доклад туса пачĕ.

Ирхи ларурах ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн отчотĕпе ревизи комиççин доклачĕ тăрăх, пренире 15 делегат тухса каларĕç. Пренире тухса каланă йулташсем пурте парти Тĕпкомĕн февраль-март уйăхĕнчи пленумĕ хыççăн Шупашкар хулинчи парторганизаци хăйĕн ретне троцкиссенчен, бухаринецсенчен, буржуазлă-националиссенчен тата халăхăн ытти тăшманĕсенчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернине, партипе совет тата хуçалăх организацисене çĕнĕ çынсем, коммуниссемпе партире тăман большевиксем пынине палăртаççĕ.

— ПСК(б)П хула комитечĕн кивĕ составĕ чухне бÿрократизм пысăк вырăн йышăннă пулсан, халĕ çав ирсĕрлĕх хула комитетĕнче çук. Халĕ кашни коммунис хула комитетне хăйулăн кайса çÿрет,—тет Гричканĕв йулташ (Чăвашпромсойуз).

Малала Гричканĕв йулташ хулари ĕççыннисен пурнăçне йăла условине лайăхлатасси çине кăтартса парат.—Халиччен ĕçлекен столовăйсем çителĕксĕр. Столовăйсенче чĕрет. Хула комитечĕн çак çитменлĕхе пĕтерес пирки уйрăмăнах хытă ĕçлемеле. Ман шутпала, кашни урамра пĕр столовăй пулмала,—тет Гричканĕв йулташ.

Гричканĕв йулташах парти вĕренĕвĕнчи çитменлĕхсене кăтартса парса, вĕсене çитес çывăх кунсенчех пĕтерме сĕнет. Вăл Шупашкарти коммуниссем валли общеобразовательнăй шкул организацилеме сĕнет.

Пренире тухса каланă йулташсем партипе совет тата хуçалăх организацисенчен халăх тăшманĕсене тасатас ĕçре пулнă йăнăшсене те хăйулăн кăтартса нараççĕ. Йалхуçалăх аслă шкулĕнчи пуçламăш организаци, елекçĕсем хыççăн кайса, Никитин агрономпа Йакăвлĕв студента парти ретĕнчен кăларса пăрахнă,—тет Краснов йулташ.

Шалти суту-илÿ Халăх Комиссарĕ Ваструк йулташ суту-илÿ организацисенчи парти организацисем, уйрăмăнах Чăвашсойуз çумĕнчи пуçламăш организаци халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕн йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе пите çителĕксĕр кĕрешни çине кăтартса парат.

— Суту-илÿ организацисенче пайанччен сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес пирки татăклă ĕçе тытăнман. Чебторг пĕрремĕш кварталта промышленнăç таварĕсене пайăн-пайăн кÿрсе килме шутланипе, хулана таварсăр тăратса хăварнă,—тет Ваструк йулташ.

Петров йулташ (çыхăну пайĕ) парти Тĕпкомĕн февраль-март уйăхĕнчи Пленумĕ хыççăн, парти организацисен ĕçĕ сисĕнмелех ÿснине палла тăват.—Малтанах пирĕн парти организацийĕнче пурĕ те 5 коммунис пулнă пулсан, халĕ 18 коммунис, сочувствуйушчисен группинче 10 çын шутланать. Комсомолецсен йышĕ те хăвăрттăн ÿссе пырат, 23 комсомолецран 64 комсомолеца çитнĕ.

Пренире Богданăв (Çутĕç Халăх Комиссариачĕ), Игнатйĕв (Йалхуçалăх институчĕ), Воробйов (Йалхуçалăх Коммунисла аслă шкулĕ) йулташсем тухса каларĕç. Вĕсем уйрăмăх хулари коммуналă строительствă ĕçне анлăн сарса пырасси çине, ку ĕçре халиччен пулса пынă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерсси çине кăтартса пачĕç.

Планерсемпе ушкăнпа вĕçни

Совет планерисĕсен чаплă çитĕнĕвĕ

Ийунĕн 1-мĕшĕнче Совет планерисăмĕн мăçтăрĕсем Расторгуйĕв, Ильченко тата Коротăв йулташсем планерсемпе калама çук чаплă ушкăнлăх вĕçев туса ирттернĕ. Тулă хулинчен тÿремĕн 50 километр вĕçсе кайса пурте пĕр вырăна анса ларма задани илсе, Расторгуйĕв, Ильченко тата Коротăв йулташсем, самолетсенчен кăкарăнса, сывлăша вĕçсе хăпарнă.

Кăнтăрла 12 сехет тĕлĕнче вĕсем самолетсенчен вĕçерĕннĕ те часах куçа курăнми пулнă. Пĕр тăватă сехетрен планериссем виççĕшĕ те пĕрле Тушинăри аеродрома анса ларнă, вĕсем тÿремĕн 180 километр вĕçнĕ.

Планерсемпе çавăн пек ушкăнпа вĕçни чи пирвайхи хут пулнă-ха. Совет планерисĕсен çитĕнĕвĕ уйрăмах çакăншăн чаплă пулса тăрат; вĕсем тĕрлĕ конструкцисемпе тунă планерсемпе вĕçнĕ.

(ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Америкă пичечĕ Çурçĕр Китайри лару-тăру çинчен

Америкари „Нью-Йорк Таймс“ хаçатăн Бейпинри корреспонденчĕ Çурçĕр Китайри лару-тăру çинчен çапла çырса пĕлтерет:

„Çурçĕр Китайра йапонĕцсем хăшпĕр хуласене çĕс тата чукунçулсемпе шоççе çулĕсен, йухан-шывсемпе каналсен хĕррисем тăрăх тунă персе çитермеле ансăр территорисене çĕс контрольдесе тăраççĕ. Вăл та пулин кăнтăрла кăна пулса пырат“. Малала корреспондент çапла çырат: Çар тата економикă тĕлĕшĕнчен Йапони пĕтĕмпех лачакана кĕрсе ÿкнĕ.

Йапонĕцсем „çар вăйĕпе пусмăрласа пырса кĕнĕ“ районсенче хăйсене хуçасем пек тыткалама пултараймаççĕ.

Китайăн нумай пинлĕ партизанĕсем выранти халăхсемпе пĕрле Йапони гарнизонĕсем çине пĕр майăх атакăлаççĕ, чукунçулсемпе кĕперсене çĕмĕреççĕ. Бейпин—Ханькоу чукунçулĕ çинче Китай партизанĕсем ултă кун хушшинче Йапонин виçĕ бронепойĕсене çырмана йăвантарса йанă.

Партизансен 20 пин çынлă отрйачĕ Баодин хулине (Хебей провинцин столици) çавăрса илнĕ. Çакна хула Йапони гарнизонĕн çĕрле ирĕксĕрех хулан çиреплетнĕ пайне тухса каймала килнĕ. Китай партизанĕсем хулан ытти пайĕсене пырса кĕнĕ, вĕсем хулари халăхсемпе йулташла, таванла каласаççĕ тата хăйсене кирлĕ таварсене сутăн илеççĕ.

(ТАСС).

Германире тата Австрире фашисла террор вайлании

ПРАГА, ийунĕн 1-мĕшĕ (ТАСС) Фашисла террор хумĕ пĕтĕм Германире сарăлса пырат. Майăн 31-мĕшĕнче Берлинра 400 çынна ытла арĕсленĕ. Венă хулинче (Австри столици) арĕсленисем йулашки кунсенче 2.000 çынран та иртеççĕ. Австрире, жандармерин йатарласа тунă моторизациленĕ отрйачĕсем ĕçлеççĕ.

Германи фашисĕсем Австрире хăйсене хуçа пек тыткаланишĕн ĕççыннисем тарăхаççĕ, вĕсем уйрăмах куллен кирлĕ çимĕççен хакĕсене ÿстернишĕн ÿпкелешеççĕ. Фашиссем, ĕççыннисен, тарăхуне сирсе йарас тесе, çав çимĕççеен хакĕсем ÿснишĕн йеврейсем айăплă тесе, йеврейсене массăлăн арĕслеççĕ.

Куллĕн кирлĕ çимĕççен хакĕсем ÿсни, халăхсем хушшинче хăраса ÿкни, ĕççыннисĕн массисем фашисла йĕркене кураймасни тата ун çине çиленни кашни кун ÿссе пырат.

(ТАСС).



Республикăлла Испанире.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Республика çарĕн паттăр гранатометчикĕсем фронтра. (Союзфото).

Китайри вăрçă

Хенань провинцин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче, Кайфынрен хĕвелтухăçнеле (Çурçĕр Китай), Китай çарĕсем вăрçă ĕçĕсене анăçлăх туса пыраççĕ. Йапонин 14-мĕш дивизине халĕ те Китай çарĕсем хупăрласа тăраççĕ.

Китай çарĕсем Аньхуей провинцин çурçĕрпе хĕвеланăç пайĕнче Мынчен хулине тытса илни çинчен çирĕплетсе пĕлтереççĕ.

Гуйде-рен кăнтăр хĕвелтухăç йенчели районта (Лунхай чукунçулĕ çинче) йапонĕцсем çĕнĕрен наступлени тума тытăннă.

Кăнтăр Китайра Китай çарĕсем Амой çине контрнаступлени тунă. Калама çук хăйар çапăçусем пыраççĕ.

Йапони авиацийĕ Кантон хули çине тата унăн çывăхĕнчи хуласем çине бомбăсем пăрахма халĕ те чарăнмаст-ха. (ТАСС).

Орденлă Чăваш республикĕ хăйĕн Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем

ВЛАДИМИР НЕМЦĔВ

Урамала пăхакан кантăк уçă. Выљанчăк çил кантăкран кĕрсе, сĕтел çинче выртакан çĕнĕ хаçатсене варкăштарса илет, çырма пуçлана тетрачĕсене уçа-уça пăхать.

Сĕтел хушшинче ларакан çамрăк çын пĕтĕм тимлĕхĕпе Момзĕн „Историйĕ" çине тăраннă. Вăл хăй умĕнче çил выљакаланине асăрхамасть.

— Владимир Михайлыч!—илтĕнсе кайать кантăкран уçă сасă.— Халљех пухăва пымала!

Мĕнле пуху пуласси çинчен ыйтса та йулаймасть Владимир Михайлăвич, уçă сасăлă йекĕт малала ывăнать.

Тепĕр сехетрен Аслă Тайапари Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕнче Владимир Михайлăвич хăй çинчен мухтавлă та ырă сăмахсем илтет. Колхозри аслă коњух Прасковйă Терейкина ăпа, Немцĕв йулташа, вăл халăх хушшинче хĕрӳлĕ ĕçленĕшĕн, ачасенĕ шкулта лайăх верентнĕшĕн, ĕçре йалан ах таса, тӳрĕ чĕреле пулнишĕн, йалйышне кирлĕ вăхăтра кирлĕ ăс парса, кирлĕ ĕçпе кирлĕ сăмахпа куллен пулăшса пынăшăн, Чăваш республикен Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата сĕнет.

Терейкина йулташăн сăмахĕ колхозра çĕç мар, пĕтĕм Йелчĕк суйлав округĕ тăрăх ăнăраса кайрĕ. Владимир Михайлăвич çинчен пур çĕрте те ырă кăмăлпа калаçаççĕ. Халăх хăйĕн ĕçне пули-пулми çынна шанса памасть. Владимир Немцĕв халăхшăн йалан ах лайăх ĕçленĕ. Вăл çамрăк-ха, пĕтĕмпе те 26 çулта çеç. Малашнехи ĕмĕтсем тата пысăкрах, çутăрах, хĕрӳлĕрех.

Пурнăç çулĕ унăн пысăк мар. Унта уйрăм геройла ĕçсем не трагедисем, драмăсем çук. Немцĕв халăхăн кулленхи ĕçĕнче ӳснĕ, çакăнта шанчăк илнĕ, мухтава тухнă. Вунтăватă çула çитсен, вăл пионертан комсомола куçать. Политграмăтă вĕренет. 1928 çулта Уљйанăвскăри педтехникума вĕренме кĕрет. Çĕршыв ку вăхăтала, пĕррěмĕш пилĕкçуллăх планĕ тăрăх, йăвăр индустри гигачĕсем тума тытăнать. Комсомол Тĕп омĕн мобилизацийĕпе, Немцĕв строителĕ пулса ĕçлеме, аслă столицăна кайать. Вăл саватсем, пысăк дворецсем тунă çĕрте ĕçлет, çĕр чавать, никĕс хывать. Мускавăн улăпла ӳсĕмне ун вăйĕ те хутшăннишĕн савăнать.

Мускавран Немцĕв социалисăм строителĕн ударлă грамăтипе таврăнать. Татах Уљйанăвскăри педтехникумра вĕренме тытăнать. Кунта вăл Мускав хĕрӳлĕхĕпе ĕçлет, вĕренет.

Аслă Тайапа шкулĕнче ĕçлеме пуçлани халь акă пилĕк çул иртрĕ. Вăл пурнăç çулĕ çинче нихăçан пĕр утăм кайала чакман, йалан ах малала пăхнă, çирĕппĕн утнă. Шкулта малтан—таван чĕлхе преподавателĕ, унтан вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ, 1935 çултанпа шкул директăрĕ.

Владимир Михайлăвич халĕ истори вĕрентет. Историкĕ уйрăмах анлă тавракурăм, пысăк пĕлӳ кирлĕ. Немцĕв йулташ пĕр вырăнта тапартатса тăмасть, вăл Мускаври историпе философи институтĕнче заочнă вĕренет, лайăх пăллăсем илет.

Вĕренет, çав вăхăтрах шкулти мĕн пур учителсене те вĕрентет. Аслă Тайапана килнĕренпе вăл пĕр улшăнмасăр пропагандис пулса ĕçлет. Учителсем кăçал политкружокра ССР Союзĕнчи халăхсен историйĕпе 33 лекци, парти историйĕпе 25 лекци итленĕ.

Халăх ĕçĕнче Немцĕв ывăнма пĕлмест. Вăл—йалсоветра культсекци руководителĕ (Чăваш Тĕп ĕçтăвкомĕ ăна лайăх ĕçленĕшĕн преми панă), колхоз бригадинче—агитатăр, стена хаçат редактăрĕ. Вăл республикăри, районри хаçатсен активлă корреспонденчĕ. Хăйĕн ĕçĕпе вăл колхозри, йалсовет ĕçĕнчи çитменлĕхсене вăхатра пĕтерме пулăшать.

Йал çыннисем пурнăçри чи пысăк ыйтусемпе Немцĕв патне пыраççĕ, весем ăна хăйсен шухăшĕсем çинчен пĕтĕм кăмăлран калаçса параççĕ. Владимир Михайлăвич пулăшмалине пулăшать, ответлемелине ответлет. Вăл халăх пурнăçĕпе, халăх ĕçĕпе пурăнать.

Аслă Тайапа шкулĕ районра—малта пыракан шкул. Ачасем вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пыраççĕ. Малтанхи вăхăтра ку шкулта вĕренӳ ĕçне пĕр пысăк инкек—трахом чăрмантарса пынă. Шкулта вĕренекен 314 ачаран 135 ача трахомлисем пулнă, вĕсенчен кăçалхи çул 85 ачана сыватнă. Вĕренӳре йулса пыракан ачасене консуљтацисем урла, уйрăм занятисем ирттерсе пулăшаççĕ. Ачасен клас тулашĕнчи вăхатне йĕркелес йĕнĕпе пултарулăх кружокĕсем ĕçлеççĕ.

Шкул социалисăмлă çĕршыва валљи çулран-çул пахарах пĕлӳлĕ ачасем вĕрентсе кăларать.

1937 çулăн пуçламăшĕнче Немцĕв йулташ коммунисĕн парти ретне кĕнĕ. Унăн политикăла активлăхĕ ӳссех пырать. Государствă ĕçне туса пыма çакăн пек хĕрӳлĕ деятелĕсем кирлĕ. Халăх Владимир Михайлăвич Немцĕв йулташа шанать.

Ухсай Йаккăвĕ,
Аркади Ĕсхĕл.

Суйлав кунĕ—пысăк уйав

„Комбайн" колхоз уйĕнчен пуçланса Енĕш шывĕ хĕррине çитиччен тăсăлакан çырма Шуртавăш йалне икĕ йенне уйарса выртать. Çырмаран кăшт çеç тăварах пĕр пилĕк çул кайала лартнă çамрăк йăмрасем кашласа лараççĕ. Йăмрасен çуммипе выртакан сукмакпа кăнтăрала утатăн та, пĕр тăваткăл симĕс çерем çине тухса тăратăн. Çырма хĕрринче пушар сарайĕ, чыслă колхозник Моиççей мучи пахчи çумнерех кооператив лавки, урам йенче йалмаган çĕнĕ çурчĕ ларать. Çак çуртсем хушшинче çерем лаптăкĕ пур. Çуллахи лăпкă та ăшă кунсенче, йе каçалапа пухăнакан пухусене Шуртавăш халăхĕ йалан ах çакăнта ирттерет.

Майăн 29-мĕшĕ. Ку кун Шуртавăшра уйав пекех пулса иртрĕ. Ворошилăв урамĕнчи суйлавçăсем шап-шура та таса çипуççемпе çерем тăваткăлнеле утаççĕ. Кунта пайан РСФСР-па ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ май кружок зањатийĕ пуласçине пурте малтанах пĕлнĕ. Çавăнпа та вĕсем пĕр пĕринпе калаçса, май уйавне тухнă пек хаваслăн пуçтăрăнаççĕ. Пуринчен маларах ку вырăна колхоз председателĕ И. Федотăв, счетовод Ç. Василийĕв, бригадир Й. Фомин, колхоз правленин членĕ Й. Григорйĕв пырса çитрĕç. Малтан çитнисене кĕттермесĕр агитатăр ĕçе тытăнчĕ. Вăл пилĕк-улттă суйлавçăна малтанлăха хаçатри çĕнĕ хыпарсене вуласа пачĕ. Унтан, вунвуннилĕк çын пуçтарăнсан „Турăсăр" сборникри тĕнĕ хирĕçле çырнă илемлĕ произведенисене вуласа пачĕ. Çав хушăрах çынсем пуçтарăнса çитрĕç. Агитатăр Серафимовичăн „Чудо" калавне вуласа пĕтерсен, суйлав Положенине вĕренес ĕçе куçрĕ. Ку заньятинче ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положенине, пурне те тĕплен ăнлантарас шутпа, тепĕр хут çĕнĕрен пуçласах вĕрентĕмĕр. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш сыпăкесенче примерсемпе, ĕлĕкхи вăхăтри „суйлавсем" мĕнле пулнипе çыхăнтарса ăнлантартăмăр.

— Патша самодержавийĕ чухне хĕрарăмсене, çирĕм пилĕк çултан çамрăк çынсене, чухăнсене шкулсенче вĕренекенсене, çар службинче тăракансене суйлав прави паман... Мĕншĕн? Халĕ мĕнле?.. Çак ыйтусене хирĕç çутатса калать агитатăр.

— Çав вăхăтрах ĕлĕк помещиксем нумай сасăпа усă курнă. Çĕрпӳ уйесĕнчи 1912 çулти сĕçсра пурĕ 52 çын пулнă. Вĕсенчен 41-шĕ—пупсем. Ыттисем тата кам пулнă тетĕр? Паллах, ĕççыннисем мар. Вĕсем Арцыбашевсем, Безобразăвсем, Курбатăвсем...

— Ара, Курбатăв арман хуçине хамăр та пĕлетпĕр ске...—калаçăва хутшăнать Тимофей Макçимăв.

— Вĕсем Енацкисем пек помещиксем тата купецсем пулнă.

— Ара, Енацки текенни вăл ман хуçа пулни вĕт. Кӳршнĕкре епĕ хам пулнă ун патĕнче тарçăра..

— Çавăске вăл...— тет Йакăв Григорйĕв. Халĕ акă епĕр ийунĕн 26-мĕшĕнче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлатпăр. Сталин—пирĕн пĕррěмĕш кандидат. Чăваш ĕççыннисем, Сталин соратникĕсене—Молатăв, Ворошилăв, Каганович, Микойан, Йежов йулташсене ЧАССР Верховнăй Советне суйлама палартни, вĕсем уйрăм округсем тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пани пурне те савăнтарать.

Агитатăр йулташ çулпуççен кĕске биографипе паллаштарнă чухне, вĕсен портречĕсене, сăнĕсене кăтартса ăнлантарчĕ. Коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, халăхăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсемшĕн, социалисăмлă çĕршывăн патриочĕсемшĕн Шуртавăш суйлав участкинчи суйлавçăсем ытти участкăсенчи суйлавçăсене Андрейĕва Зойа Ананйĕвăшăн (РСФСР Верховнăй Советне) тата Йефимăва Александра Йефимăвнăшăн (ЧАССР Верховнăй Советне) пурте пĕр çын пек пулса сасăлама чĕнчĕç.

Калаçу пĕтнĕ вăхăтала пионеркăсем пĕрерĕн-икшерĕнех пуçтарăнса çитрĕç. Вĕсем, Йефимăвă Љубă пионеркă (Звено вожатăйĕ) пуçарнипе пухăннăскерсем, „Çĕршыв йурри", „Сталин çинчен хунă йурă", „Хĕвелĕмĕр Сталин", „Жить стало лучше", „Эх, хорошо,". „Спой нам ветер..." йурăсене йурласа пачĕç.

Заньятисене кашнинчех çапла савăнăçлă ирттерме пуçлавăрапа суйлавçăсем суйлав Положенисемпе Конституцине вĕренмели заньятисене йеркелĕ çӳреççĕ. Суйлавçăсен ĕçри хастарлăхĕ те ӳсрĕ. Йединоличниксем колхоза кĕресси сарăлсах пырать. Пĕр Шуртавăш йаленчех 4 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

Çапла епĕр Шуртавăш суйлав участкинче суйлавçăсене хăйсен суйлав правипе усă курма суйлава хутшăнтарассишĕн кĕрешетпĕр. Ку ĕçре пионерсем те питĕ нумай пулăшаççĕ.

Шуртавăш участкинчи суйлав комиççин председателĕ—

А. Сотнезăв

Муравйов агитатăр

Марк Йаковлĕвич Муравйов йулташ Услапари „Броневик" колхозра агитатăр пулса ĕçлет. Вăл ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлав кампанийĕ вăхатĕнче те агитатăр пулса ĕçлерĕ. Унăн агитаци ĕçĕнче опыт пур. Колхозниксем Марк Муравйова аван пĕлеççĕ, вăл колхозниксем хушшинче авторитетлă. Муравйов йалан ах лекцисем, докладсем, калаçусем туса ирттерет. Тĕнчери ларутăру ыйтăвĕсем çинчен, Совет Союзĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен хаçатсем тăрăх хыпарсем вуласа парать, ăнлантарать.

Халĕ, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ вăхатра, Муравйов агитатăр пĕр кружока йертсе пырать. Вăл заньятине ирттерме йалан ах тĕплĕн хатĕрленет.

Каçхине колхозниксемпе колхозницăсем колхоз клубне пухăнаççĕ. Муравйов йулташ та суйлав Положенисем çинчен хатĕрленĕ материалĕсене илсе, колхозăн клубне пырать. Колхоз клубне партипе правителствă çулпуççен сăнĕсемпе, суйлав кампанийĕ тĕлне тухнă плакатсемпе илемлетнĕ. Кучтах справкă сĕтелĕ пур. Унта йалан ах тивĕçлĕ ăнланмала ответ параççĕ.

Суйлавçăсем пухăнса çитсен, Муравйов агитатăр заньяти ирттерме тытăнать. Калаçу пуçлансан, вăл карттă тăрăх РСФСР тата ытти союзлă республикăсем çинчен ăнлантарса парать. Вăл РСФСР территорийĕ ĕлĕкрепе йепле улшăнса пыни çинчен калать. Чăваш халăхĕн ĕлĕкхи хĕн-хурлă пурнăçĕпе халљхи пуйан та куљтурлă пурнăçне илсе кăтартать.

Муравйов ирттернĕ заньятисенче пулнă суйлавçăсем йалан ах çителĕклĕ таран ăнланса йулаççĕ.

Муравйов кружокĕсенче заньяти ирттернипех чарăнса лармасть. Вăл çамрăксене пухса ыйтусемпе ответсен вечĕрĕсем туса ирттерет. Кунта суйлав Положенисене тĕплен ăнлантарса панă хыççăн, çамрăксем хăйсем ăнланман ыйтусене ыйтса пĕлеççĕ. Муравйов çамрăксен кашни ыйтăвĕ çинех тĕплĕн тата ăнланмала ответ парать. Çамрăксен вечĕрĕсене кунта РСФСР тата Чăваш АССР суйлав кампанийĕ пуçланнăранпа 2 хутчен туса ирттернĕ. Çакăн пек вечĕрсемпе çамрăксем питех те интересленеççĕ.

Çуркуннехи ăшă каçсенче çамрăксем тата ваттисем урамсене тухса лараççĕ. Муравйов агитатăр та вĕсемпе пĕрлех. Ун аллинче йалан ах çĕнĕ хаçат-журналсем. Хаçат çинчен тĕнчери лару-тăрусем çинчен, Совет Союзĕнчи çĕнĕ хыпарсем çинчен хаçат тăрăх вуласа пама тытăнать. Хаçат çинчи çĕнĕ хыпарсене вуласа панинчен пуçласа, Муравйов РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисем çине куçать. Çапла вара кружок заньятийĕ пулса иртет.

Ст. Филиппăв.

Пионерсем савăнăçлă канаççĕ

Пирĕн Совет Союзĕнче анчах ачасем куљтуралă та савăнăçлă ӳсеççĕ. Вĕсене савăнăçлă ӳстерессишĕн пирĕн партипе правителствă нумай условисем туса параççĕ: лагĕрсем, плошчадкăсем, ача сачĕсемпе йаслĕсем т. ыт. те.

Кăçалхи çул пирĕн Чăваш Республикинче те нумай пионерсем лагĕрсенче канаççĕ.

Республĕкри пионерсен лагĕрĕсĕр пуçне, пур районсенче те районти пионерсен лагĕрĕсем тата колхозри пионерсен лагĕрсем уçăлаççĕ. Республикăри пионерсен лагĕрĕ ийунĕн 5-мĕш числинче уçăлать. Унта пурĕ 600 пионер канмала.

Районти лагĕрсем ийунĕн 15-мĕш числинчен пуçласа, августăн 1-мĕш числинчен ĕçлеççĕ.

Районти лагĕрсенче пурĕ 5.810 пионер канмала.

Унсăр пуçне колхозсем çумĕнче уçăлакан пионерсен лагĕрĕсенче 4.800 пионер канаççĕ.

Лагĕрсемсĕр пуçне кăçалхи çул республикăра ача плошчадкисем организацилеççĕ. Çав плошчадкăсем витĕр пурĕ 75.824 пионерпа октябрйатсем тухаççĕ.

Унсăр пуçне Шупашкар хулинчи пионерсем валљи Илйинкăра лагĕр уçăлать. Вăл лагĕрте 400 пионер канмала.

Кашни райĕçтăвком çумĕнчех районти пионерсен лагĕрне организацилессипе ăна ирттерессипирки ĕçлекен комиççи пулмала. Çав комиççисене хăшпĕр районсенче пайанхи кун та организацилемен (Шăмăршă, Шăнкăртам).

Лагĕрсене организацилес тĕлĕшпе Канаш райĕçтăвкомĕпе Патăрйел райĕçтăвкомĕсем аван ĕçлесе пыраççĕ.

Пионерсемпе вĕренекен ачасен савăнăçлă канăçне организацилесси кашни комсомол организацийĕнех, Çутĕç Халăх Комиссариачĕн органĕсен ответлă ĕçĕ пулса тăрать. Кăçал лагĕрсемпе плошчадкăсенче ытти çулсенче пулнă çитменлĕхсене асра тытса лайăх организацилемеле.

А. НИКОЛАЙЕВ.

Иван Çергейĕвич Мурашкин

Вăл 1897 çулта Кувакинă районĕнчи Миренки йалĕнче çуралнă. Ашшĕ унăн Улатăрти пăравуссем йусакан савăтри рабочи,—унта вăл 1924 çулччен фрезеровшчик пулса ĕçленĕ. 1924 çултанпа пенсионер.

Революциччен Ваньăсен çемйи чухăн пурăннă. Чухăн пурнăçа пула 11 çулти Ваньăн Миренки йалĕнчи Левухин тата Кондратйĕв кулаксем патне кайса ĕçлесе çăкăр тупмала пулнă. Унтан Миренки йалĕнче кĕтӳçре çӳренĕ. Сăрă шывĕ çинче сулă йухтарнă çĕрте тата Улатăрти пăравуссем йусакан савăтра рабочи пулса ĕçленĕ.

1918—1922 çулсем хушшинче Иван Çергейĕвич Хĕвелтухăç фронтĕнче шура интервентсемпе кĕрешнĕ çĕрте Хĕрлĕ çарта пулнă.

1922—1926 çулсем хушшинче Мурашкин йулташ тĕрлĕ ĕçре ĕçлесе пурăннă. 1926 çултан çак вăхăтченех Улатăрти пăравуссем йусакан савăтра трупасем тунă çĕрте ĕçлет.

Мурашкин йулташ пăравуссем йу акан савăтри стаханавла йухăма пуçарса йараканĕ пулса тăрать. Вăл йалан ах ĕç нормине 200—250 процентшер тултарса пырать. Стаханăвла ĕçшĕн ăна савăт директцийĕ темиçе хутчен те хаклă премисем панă тата Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ икĕ хутчен „Ударник Сталинского призыва" значокпа наградăланă.

Çак вăхăтрах вăл общественлă политикла ĕçсенче те тăрăшса ĕçлет. Савăтри суйлавçăсене суйлав саккунĕсене верентес ĕçре чи лайăх агитатăр пулса тăрать. Мурашкин йулташ 1931 çултанпа ПСК(б)П членĕ, 1937 çултанпа ПСК(б)П Улатăр райкомĕн тата ПСК(б)Парти Чăваш Обкомĕн членĕ.

Иван Çергейĕвич Мурашкин йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Улатăрти гармоньсем тăвакан хапăкри рабочи емпе служăшчисен, инженерла-техникла работниксен суйлав умĕнхи пухăвĕнче кандидата тăратнă.

Халĕ ăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Чуварлей суйлав округĕнче регистрациленĕ.

Чуварлей суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали кун—ийунĕн 26-мĕшĕнче хăйсен сасĕсене Иван Çергейĕвич Мурашкин йулташăн параççĕ.

„Телейшĕн кĕрешекен çынсемшĕн сасăлатăп"

Исакăвă суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Никанор Миронăвич Çеменăв, Албахтинă округĕ тăрăх Йевдокийа Димитрийĕвнă Димитрийĕвă, Карай округĕ тăрăх Петр Йефремăвич Йефремăв йулташсен кандидатурисене регистрацилевĕ. Депутата суйлама палартнă çак кандидатсем халăхăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсем.

Исакăвă суйлав округĕнчи доверенăйсемпе суйлавçăсен канашлăвĕнче Харитонăвпа Николайĕв йулташсем тухса каларĕç. „Исакăвă" колхоз членĕ Й. Харитонăв суйлавçă çапла каларĕ:

— Октябĕр революци хыççăн хĕрлĕгвардейцсемпе пĕрле тăшмансене хирĕç вирлĕ кĕрешрĕм. Вулĕçтăвком членĕнче ĕçленĕ вăхăтра кулаксен восстанийĕ пулчĕ, унта мана вĕлерме тытăнчĕç. Ĕлекхи вăхăтра епĕр çителĕклĕ пурнăçпа пурăнман. Выљăх-чĕрлĕх усраса курман. Çи-пуç çĕтĕк-çатăк пулнă. Халĕ епĕр Сталин йулташ йертсе пынипе пуйан та куљтурлă пурнăçпа пурăнатпăр. 1937 çулта арăмпа иккĕн 590 ĕçкунĕ туса 255 пăт тĕштырă илтĕмĕр. Вăл пире 3 çул çиме çитет. Ачасене пурне те шкулта вĕрентетĕп. Епĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче рабочисемпе хресченсен телейĕшĕн кĕрешекен çынсемшĕн сасăлатăп,—терĕ.

Закамский.

Йефроçинийа Харитонăвнă Харитонăвă

Епĕр нихçан асран кайми телейлĕ ĕмĕрте, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçĕпе, учителпе, чи çывăх туспа—хамăрăн Сталин йулташпа пĕр вăхăтра пурăнатпăр. Çавăнпа пурнăç савăнăçлă, епĕр телейлĕ.

Аслă Сталин пире пуйан та куљтурлă пурнăç туса пачĕ. Аслă Сталин пирĕ чи демократилĕ Конституци туса пачĕ. Сталинла Конституци совет халăхне ĕçлев, вĕренӳ, кану прависем парать. Çак правасемпе совет халăхĕ туллин усă курса пынипе производствăн пур участкисенче те, йалхуçалăхĕнче те, промышленăçра та йулашки çулсем хушшинче çĕнĕрен-çĕнĕ стахановĕцсемпе стахановкăсем çĕршерĕн, пиншерĕн ӳссе çитĕнчĕç. Çавсенчен пĕри пулса тăрать те ĕнтĕ пирĕн йуратнă кандидат—Вăрнарти МТСтанцинчи хĕрарăмсен трактăр бригадин бригадирĕ, комсомолкă, Йефроçинийа Харитонăвă йулташ.

12 мĕш №-лĕ трактăр бригадин будки. Будкă ăшне партипе правителствă çулпуçĕсен сăнĕсемпе, суйлав тĕлне тухнă плакатсемпе тата лозунгсемпе илемлетнĕ. Трактăрискăсем хăйсен пушă вăхăтне çак будкăра тĕрлĕ вăйăсем выљаса, хаçат журналсем вуласа ирттереççĕ. Хăшне пĕрисем ефир тăрăх килекенĕсене хыпарсене репродуктăр умĕнче тимлĕн итлеççĕ. Тепĕр чухне патефон пластинкисем çинчи илемлĕ кĕвĕсемпе йурăсене итлесе ĕçлес хаваслăха татах та хăпартаççĕ. Будкăрах трактăр бригадин стена хаçачĕ пур. Стена хаçачĕ урлă трактăрискăсен ĕçри ӳсĕмне йалан ах çутатса пыраççĕ.

Трактăр бригадинче кăçал 20 трактăрискă ĕçлет. Харитонăвă трактăрискăсем мĕнле пахалăхпа ĕçленине йалан ах вырăнта, сухалана çĕрте тĕрĕслет. Çитменлĕхсем пулсан, вăл çитменлĕх ĕне мĕнле пĕтермели çинчен çийĕнчех кăтартусем парса хăварать.

Трактăрискăсем çменăран таврăнна хыççăн, Харитонăвă бригадир вĕсене РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентет, кунсăр пуçне тĕнчери лару-тăрусем çинчен калаçусем ирттерет. Çакăнтах трактăрискăсем социалисăмла ăмăрту договăрĕ тăрăх хăйсем çине илнĕ обйазательствăсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен каласа парать. Кайра пыракансене малтисемпе танлашма чĕнет.

* * *

Йефроçинийа Харитонăвăн ашшĕ-амăшĕсем çĕр ĕçĕпе пурăннă. Революциччен вĕсен çемйин мĕн пурĕ те пĕр йат çĕрĕ çеç пулнă. Анчах та Йефроçинийа хăйĕн ашшĕне астумасть, ăна вăл курман. Унăн ашшĕ, Харитон Петрович, 1919 çулта граждăн вăрçинче ирĕклĕхшĕн çапăçса вилнĕ. Ашшĕ вилсен Йефроçинийăн амăшĕ Варварă Григорйĕвнă 3 çулхи Йефроçинийапа тата пĕр çулхи Давид ачипе çеç тăрса йулнă.

1928 çулта 12 çулхи Йефроçинийа Çĕнйахакассинчи пуçламăш шкула вĕренме кайать. Йалтан вĕренсе тухсан, 1931 çулта Хапăсри колхоз çамрăкĕсен шкулне вĕренме кĕрет. Анчах кунта пĕр çул вĕреннĕ хыççăн, Йефроçинийĕ малала вĕренме май килмен, ăшă тумтир çуккине пула тата килте амăшĕсĕр пуçне ĕçлекенни никам та пулманнине пула, унăн вĕренме чарăхмала пулнă.

1930 çулта Çĕнйахакасси йалĕнчи чухăнсемпе вăтам хресченсем пуйансен пусмăрĕ айĕнче йухăннă хуçалăхне йусама колхоз организацилеççĕ. 14 çулхи Йефроçинийа хăйĕн амăшĕпе тата 12 çулхи шăллĕпе хаваслăнсах колхоза кĕреççĕ. Колхозра Йефроçинийа чĕререн тăрăшса ĕçленĕ. Ĕçре вăл хăй пек çамрăк хĕрачасен ĕçлес кăмăлĕсене хăпартнă.

Йефроçинийа часах колхозри паллă ударницă пулать. Колхоз ăна 3 хутчен хаклă йапаласемпе парнелет. 1932 çулта Йефроçинийа комсомола кĕрет.

1934 çулта колхоз правленийĕ Йефроçинийа Харитонăвăна, колхозăн паллă ударницине, трактăрисçен курсне вĕренме йарать. Йефроçинийа питĕ савăннă. Вăл машинăсемпе ĕçлеме малтанах вĕренесшĕн пулнă. Çавăнпа та ăна кĕтнĕ ĕмĕт çитнĕн туйăннă.

1935 çул. Йефроçинийа Харитонăвă пĕтĕм предметсемпе те лайăх паллăсемпе вĕренсе тухать. Ăна шанса ун аллине хурçă трактăр параççĕ.

Кĕçех Йефроçинийа трактăра чĕререн йуратса ĕçлеме тытăннă. Трактăра вăхăтра тасатнă, вăхăтра çу сĕрнĕ. 1935 çулта Йефроçинийа трактăрĕ 935 гектар сухаланă.

1936 çул. Ку çул Йефроçинийа пурнăçĕнче калама çук пысăк ӳсем çулĕ пулса тănă. 1936 çулта машинпа трактăр станцийĕ çумĕнчи комсомол организацийĕ ăна комсомолăн районри VII конференцин делегатне суйласа йарать. Кунта Йефроçинийăна райком пленумĕн членне, комсомолăн облăçри 13 конференцин делегаткине суйлаççĕ. Кунта та Харитонăвăна Обкомолăн пленум членне суйласа хăвараççĕ. Çав çултах, комсомолăн Горький крайĕнчи IV конференцин делегатки пулса, Горькине кайать вăл.

1936 çултах машинпа трактăр станцийĕ ийуљ уйăхĕнче Йефроçинийăна Канашри механизаци шкулне вĕренме йарать. Ку çулне, вĕренме кайиччен, вăл хăйĕн трактăрĕпе 480 гектар сухаланă. 1937 çулхи март уйăхĕн йулашки кунĕсем тĕлнелле шкултан вĕренсе тухса, комбайнеркă тата трактăр бригадирĕ йатне илсе таврăнать.

Машинпа трактăр станцине çитсен ăна йатарласа организациленĕ хĕрарăмсен трактăр бригадин бригадирĕ тăваççĕ. Çапла вара Йефроçинийа Харитонăвă хĕрарăмсен 12-мĕш номĕрлĕ трактăр бригадин бригадирĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Унăн бригадинчи кашни трактăр вăтам шутпа 1937 çулта 991.3-шер гектар сухаланă.

Йефроçинийа Харитонăвăна 1937 çулта та комсомолăн районри конференцийĕ райком пленум членне, облăçри конференци—Обком пленум членне суйласа хăварнă. Вăлах—Вăрнар райĕçтăвкомĕн членĕ.

Тăлăх хĕрача, трактăрискă, трактăр бригадин бригадирĕ—çакăн пек Харитонăвăн хисеплĕ çулĕ, ӳсĕмĕ.

Вăрнар районĕнчи чи паттăр хĕрарăмсенчен пĕрне, Йефроçинийане Уравăш суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă. Ăна халĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Уравăш суйлав округĕнче баллотировкă тума регистрациленĕ.

— Уравăш округĕнчи ĕççыннисем мана ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратса, ман çине пысăк шанăç хучĕç, пысăк чыс турĕç. Епĕ вăл чыса çирĕппĕн алăра тытса тăма пулатăп,—тет Харитонăвă йулташ.

Ирĕке тухнă чăваш халăхĕн мухтавлă хĕрне, Ленин—Сталин партийĕ тата комсомол ӳстернĕскерне, Уравăш суйлав округĕнчи ĕççыннисем ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутатне пĕр кăмăллăн пулса суйлĕç.

Ст. Улангай.

Выльӑх ӑратне лайӑхлатмали шанчӑклӑ май

Выльӑхсене искусственнӑй майпа чуптарасси метизаци ӗҫӗнче чи малти вырӑнта тӑрать. Халь епӗр ӑратлӑ аҫа выльӑхсем ҫителӗклӗ тесе калама пултараймастпӑр. Пур пек ӑратлӑ аҫа выльӑхсем те пахалӑхӗ йенчен пӗр пек мар. Выльӑхсене искусственнӑй майпа чуптарма чи лайӑх аҫасене ҫеҫ суйласа илеҫҫӗ. Мӗншӗн тесен, искусственнӑй майпа ахаль чуптарнинчен 5—6 хут ытларах ама выльӑхсене чуптарса хӑварма пулать. Сӑмахран пӗр такапа 1000 сурӑх, пӗр ӑйӑрпа 150—200 кӗсре, пӗр вӑкӑрпа 200—300 ӗне чуптарма май пур. Паллах, ҫак вӑл метизаци ӗҫне хӑвӑртрах туса ҫитерме, выльӑхсен ӑратне талкӑшпех лайӑхлатма май парать. Кунсӑр пуҫне сурӑхсене искусственнӑй майпа чуптарса хӑварсан, икшер путек ытларах туса панине те асра тытмала.

Иртнӗ ҫулхи опытсем выльӑхсене искусственнӑй майпа чуптарни пысӑк усӑ панине лайӑх кӑтартрӗҫ. Колхозниксем ҫакна ӑнланса илчӗҫ. Акӑ пӗр-икӗ тӗслӗх ҫеҫ илсе пахар: Ҫӗрпӳ районӗнчи „Богатырь" колхозра иртнӗ ҫул сурӑхсене пурне те искуственнӑй майпа чуптарса хӑварнӑ. Кунта кашни 100 сурӑх пуҫне 142 путек илнӗ. Ҫав вӑхӑтрах искусственнӑй майпа чуптарман „Венера" колхозра кашни 100 сурӑх пуҫне 108 путек ҫеҫ илнӗ. „Богатырь" колхозра путексем пурте пӗр пек, шурӑ, меринос йӑхӗсем. „Венера" колхозра ула-чӑла путексем.

„Сталинцы" колхозӑн ӗне ферминчи ӗнесене искусственнӑй майпа чи лайӑх вӑкӑрпа чуптарса калама ҫук хитре пӑрусем илнӗ. Вӑл пӑрусем иртнӗ ҫулхи пӑрусенчен те пысӑкрах. Халь вӗсенчен 9 пӑру районти ӑратлӑх кӗнеки ҫине кӗртнӗ. Ҫак колхозри колхозниксем кӑҫал мӗнле пулсан та, хӑйсен килӗсенче усракан ӗнисемпе сурӑхӗсене искусственнӑй майпа чи лайӑх вӑкӑрпа, чи лайӑх такасемпе чуптарса хӑварасшӑн.

Анчах та ҫакна ӑнланса илмен колхозсем те пур-ха. Пуринчен ытла выльӑхсене искусственнӑй майпа чуптарас плана кӑҫал пуҫласа панӑ колхозсенче ӗҫ начар. Тивӗш колхозне выльӑхсене искусственнӑй майпа чуптарма „Богатырь" колхоз ҫумӗнчи пункт ҫумне ҫирӗплетнӗ. Вӗсем ҫак таранччен те пункта пӗр ӗне те илсе пыман. Райҫӗрӗҫ пайӗпе райӗҫтӑвком йенчен темиҫе хутчен те кӑтартусем панӑ пулсан та, вӗсем ҫапах ӗнесене хӑйсен ӑратлӑх йенчен начар вӑкӑрпа чуптараҫҫӗ.

Иртнӗ ҫул Ҫӗрпӳ районӗ выльӑхсене искусственнӑй майпа чуптармали плана ытлашшипех тултарнӑ. Кӑҫал та плана тултарма май пур. Халь районта ӗнесене чуптарма 5 пункт, кӗсресене чуптарма пӗр пункт ӗҫлеҫҫӗ. Ийунь уйӑхӗнче сурӑхсене чуптарма тата ҫӗнӗрен 6 пункт ӗҫлеме тытӑнасҫӗ. План тӑрӑх искусственнӑй майпа 150 кӗсре, 2000 ӗне, 7500 сурӑх чуптармала. Майӑн 18-мӗшӗ телне 42 кӗсре, 262 ӗне чуптарнӑ. Ворошилӑв йӑчӗпе тӑракан колхозри кӗсресене чуптармлли пунктӑра государствӑ витин чи лайӑх „Агас" йатлӑ ӑйӑр пур. Пунктра ӗҫлекен техник Шумалкин йулташ пункт ҫумне ҫирӗплетнӗ кӗсресене пурне те шута илсе тухнӑ. Халь вӑл кӗсресенчен пӗттисем чылай.

Ӗнесене искусственнӑй майпа чуптарас ӗҫре „Богатырь" колхоз ҫумӗнчи техник Васильӗв йулташ кӑтартулӑ ӗҫлет. Вӑл районӗпе чуптарнӑ ӗнесенчен ҫурри ытла пӗчченех чуптарнӑ. Васильӗв йулташ пункт ҫумне ҫирӗплетнӗ колхозсене кайса ӑнлантарса ҫӳрет, ӗнесен чупас вӑхӑчӗ ҫитнине сӑнаса тӑрать.

Куйбышӗв йӑчӗпе тӑракан колхоз ҫумӗнчи пункт йӑпах ӗҫлет. Техник Филиппӑв йулташ ӗнесем пункта хӑйсемех пырса кӗрсе кӗтсе ларать. Ҫаванпа та вӑл 18 ӗне ҫеҫ чуптарнӑ.

Калас пулать, ӗҫре Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ҫумӗнчи выльӑх-чӗрлӗх управленийӗ чылай кансӗрлесе пырать. Аппаратурӑ ҫумне кирлӗ запас пайӗсене вӑхӑтра памасть. Апрелӗн 26-мӗшӗнче тин хӑшпӗр йапаласене илме май килчӗ. Динатурат пачах та пулман, примуссем ҫителӗксӗр, искусственнӑй вагинӑн камӗрисем сахал. Ҫаксем ҫинчен выльӑх-чӗрлӗх управленине темиҫе хутчен те пӗлтернӗ. Анчах унтан нимӗнле ответ та ҫук. Ҫаксем вӗсем Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн выльӑх-чӗрлӗх управленинче ӗҫленӗ сӑтӑрҫӑсен сӑтӑрла ӗҫсен йулашкийӗсене халичченех те тӗпренех какласа пӑрахманнине кӑтартса параҫҫӗ.

Зоотехник К. Филиппӑв

Йертсе пыман ҫӗрте

РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали кун ҫывхарать. Ҫак чаплӑ куна пур ҫӗрте те пысӑк хавасланхпа ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ. Анчах Тавай районӗнчи чылай йалсенче суйлава хатӗрленес ӗҫ йапӑх пырать. Тушкилтре суйлав саккунне вӗренме 17 кружок организациленӗ, анчах вӗсем хут ҫинче кӑна шутланаҫҫӗ, кружоксенче ку таранччен перер занятие те туса ирттермен. Суйлавҫӑсем йалта чыл йӑшӗ суйлав кунӗ хӑҫан пулмалине пӗлмеҫҫӗ, Тӗмер йалсовет ҫекретарӗпе Шумӑв, Сахатпуҫ йалсовет ҫекретарӗ Тимаков йулташсем суйлав кунӗ хӑҫан пулассине те пӗлмеҫҫӗ.

Тушкилтре комсомол комитечӗ пур. Унта 21 комсомолец. Анчах комсомолецсем политикӑлӑ агитаци ӗҫне хутшӑнмаҫҫӗ. Комсомол комитечӗ йанвартенпе стена хаҫачӗ 3 номӗр ҫеҫ кӑларнӑ. Стена хаҫатсенче суйлава хатӗрленес ыйтӑва ҫителӗклӗн ҫутатман.

Ульанкӑ йалӗнчи вулав ҫуртне радио кӗртнӗ, анчах вӑл ӗҫлемест. Вулав ҫуртне пырсан, кирлӗ хаҫатсене тупса вулама ҫук. Суйлав литературине, суйлава хатӗрленес ыйтупа ҫырнӑ плакатсемпе лозунгсем тупма ҫук.

Райӗҫтӑвкомра ӗҫлекенсем вырӑнсене тухса йалсоветсене пулӑшу парас тӗлӗшпе ҫителӗклӗ ӗҫлеменнине пула, чылай йалсоветсенче суйлавҫӑсен спискисене тӗрӗс мар тунӑ. Тӗмер, Кармал, Тушкилт, Сахатпуҫ йалсовечӗсенче суйлавҫӑсен спискине алфавитпа туман. Колхозниксемпе йединоличниксен спискине уйрӑм туса ҫакнӑ. Сахатпуҫпе Тушкилт йалӗсенче суйлавҫӑсен йачӗсене пӗтӗмӗшпе ҫырса пӗтермесӗр точкӑсем кӑна лартса хунӑ.

Ватайалпе Йампулат йалсовечӗсенче ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет суйлавӗ вӑхӑтӗнче тунӑ кабинӑсен фанерисене ватса, ҫунтарса ҫухатса пӗтернӗ.

Вл. Ильйин.

Культ-массӑлӑ ӗҫе хакла хураҫҫӗ

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйлама хатӗрленес тӗлӗшпе Мӑналти аласталӑх ертелӗнче (Ишлейӗр.) 11 кружок ӗҫлеҫҫӗ. Положенисене вӗренме нумай суйлавҫӑсене йавӑҫтарнӑ. Ҫак ыйтупах пӗрлешӳлӗ тата бригадӑсен пухӑвӗсенче пилӗк хутчен калаҫу ирттернӗ. Положенисене вӗрентес тӗлӗшпе ертелте 7 агитатӑр ӗҫлеҫҫӗ, вӗсем массӑлӑ ӑнлантарулӑ ӗҫе уйа, пахчана, урама куҫарнӑ. Ертел членӗсем ӑҫта ӗҫлеҫҫӗ тата канаҫҫӗ, ҫаванта агитатӑр калаҫу ирттерет.

Политвӗренӳ йенӗпе ертелте икӗ кружок ӗҫлеҫҫӗ, вӗсене Толстовпа Кузнецов йулташсем йертсе пыраҫҫӗ.

Асӑннӑ кружоксемсӗр пуҫне, ертелте тата ытти тӗрлерен кружоксем пур. Сыхлӑх ӗҫне вӗренме ертел ҫумӗнчи хими кружокӗ ӗҫлет. Драмкружокра 14 ҫын тӑрать, вӗсем 4 спектакль лартса панӑ. Хор кружокӗнче 18 ҫын, вӑл 5 хутчен тӗрлӗрен йурӑсем йурласа панӑ. Тата ертелте шумовой, струннӑй, спорт кружокӗсем ӗҫлеҫҫӗ. Назарӑв йулташ тӑрӑшнипе 28 ҫынтан литературӑ кружокӗ организациленӗ.

Массӑлӑ ӗҫ вӑйланса пынӑ май ертел членӗсен культурлӑхӗ те ӳссех пырать. Акӑ, 53 ҫын йалӑнах вулама библиотекӑран кӗнекесем илсе тӑраҫҫӗ, кашни кун хаҫат вулаҫҫӗ тата ернере икӗ хутчен пӗрле пуҫӑнса вулаҫҫӗ.

Культурӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе ертелти культработник Кузнецов йулташ йуратса, интересленсе туса пырать. Хӑйӗн ӗҫне вӑл мухтавлӑ та чаплӑ ӗҫ вырӑнне хурса, тулли кӑмӑлпа ӗҫлет, ку ӗҫре ӗҫлемешкӗн ӑна ертел председателӗ кулленех пулӑшса пырать.

Ил. Сидоркин.

Тивӗҫлипе ӗҫлени курӑнмасть

Суту-илӳ ӗҫӗнче халӑх тӑшманӗсен сӑтӑрла ӗҫӗн йулашкисене пӗтересси ҫинчен ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗн майӑн 9-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленийӗнче лайӑх кӑтартса панӑччӗ. Анчах та Тутаркас райсойузӗнче ӗҫлекенсем ку постановленине вуламан та. Районри хатӗрлев кантурӗнче ӗҫлекенсем те (Альмешкин, Бычков, Йадрошӗв) ку постановлени ҫинчен пӗлмеҫҫӗ.

Райсойуз руководителӗсем (райсойуз председателӗ Колбасӑв) начар ӗҫленине пула, чылай йалпосенче кирлӗ таварсем ҫук. Мӑн Сӗнтӗр йалповӗн Ильйинкӑри уйрӑмӗнче май уйӑхӗнче 4 кун хушши тутлӑ ҫимӗҫсем (карамель т. ыт. те) пулман. Калайкас йалповӗн Шомикри уйрӑмӗнче халӗ те нумай чухне махорка пулмасть.

Мӑн-Сӗнтӗрте лайӑх пахалӑхпа ҫӑкӑр сутма пур условисем те пур. Анчах та, кунта час-часах ҫунӑк, тачка ҫӑкӑрсем сутаҫҫӗ. Ҫӑкӑр лавкинче ӗҫлекен Йагунов йулташ лавкана вӑхӑтра уҫмасть.

Тырпул пухса кӗме хатӗрленесси ҫывхарса пырать, ҫакна май вырӑнсенчен кашни кунах ҫурла, ҫава ыйтаҫҫӗ. Анчах та ку таварсем лавкасенче ҫук. Мӑн Сӗнтӗр йалповӗн председателӗ М. Прокопйӗв: „Райсойуз" илсе килмест, хамӑр илсе килес пулсан ытлашши расхут тухать",— тесе ларать.

РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗччен инҫе йулмарӗ. Анчах та ҫак пысӑк политикӑлӑ кампанире суту-илӳ организацисем хӑйсен ӗҫӗсене йӗркелеме тытӑнман.

М. Исайӗв.

Типографинче йӗркелӗх кирлӗ

Чӑвашполиграфтрестӑн Йетӗрнери типографинче нимӗнле йӗркелӗх те ҫук. Типографи пӗрремӗш квартал планне пӗтӗмпе те 45 процент кӑна тултарнӑ. Тупӑш илес вырӑнне, пин тенкӗ ытла убытка пулнӑ. Ку вӑл типографинчи рабочисем хушшинче ӗҫе тӗрӗс организацилемен пирки пулнӑ. Рабочисем хушшинче социализмла ӑмӑртӑва сарса йаман, ун ҫинчен профорганизаци те, комсомол организаци те, типографи ҫумӗнчи парторганизаци те шутламан. Ҫавна пула ӗнтӗ наборщиксем кулленхи ӗҫ нормине йаланах 50—60 процент кӑна тултараҫҫӗ. Типографи директӑрӗ Абакумӑв йаланах ӳсӗр ҫӳрет.

Типографи догӑвӑр тӑрӑх уйӑхра 15 № хаҫат кӑлармала. Анчах та кашни уйӑхрах 12—13 номӗр кӑна тума ӗлкӗреҫҫӗ. Вӗсем те пысӑк ҫитменлӗхсемпе пичетленсе тухаҫҫӗ.

Майӑн пӗрремӗшӗнче тухакан хаҫата пичетленӗ чух Абакумӑв Долбилӑвпа Вершковский печатниксене ӳрарӑн ӳкиччен ӗҫтернӗ. Ҫакна пула пӗтӗм хаҫат тиражӗнчен 30 процента йахӑн пысӑк ҫитменлӗхсемпе тухнӑ.

Ытла та тӗлӗнмеле: 4 наборщик, 1 ученик икӗ кун хушшинче пӗр хаҫат—26 пин пичет знакӗ пухаймаҫҫӗ. Абакумӑв редакци хутне 5 пин листа ытла кирлӗ мар ҫӗре йанӑ. Ҫак ҫитменлӗхсене курса, Чӑвашполиграфтрест ӑна директӑртан кӑларчӗ. Ун вырӑнне Йелиҫейӗва лартрӗ. Анчах Йелиҫейӗв та малтанхи кунсенчех хаҫата вӑхӑтра кӑларас пирки нимех те тумасть-ха.

Суйлав кампанийӗ пуҫланчӗ. Анчах „Колхозник йулташӗ" хаҫат каллех вӑхӑтра тухса тӑмасть. Ҫӗнӗ директӑрӑн айӑпӗпе майӑн 18-мӗшӗнче тухмала хаҫат майӑн 20-мӗшӗнче аран тухрӗ.

ПСК(б)П Йетӗрне райкомӗ те хӑйӗн хаҫачӗпе интересленмест.

Ник. Цветков.

Вӑхӑта культурлӑ ирттерессине йӗркелемен

Кашнийӗнех пушӑ вӑхӑта савӑнӑҫлӑ та культурлӑ ирттерес килет. Ҫакна Канашри вӑкунсем йусакан саватра йӗркелемен-ха. Саватри клубра шашкӑ-шахмӑт, домино, биллиардсем клуба пынӑ ҫынсене выльама ҫитмеҫҫӗ. Клубри буфет ҫӑва тухнӑранпа пӗрре те сутӑ туман.

Драмкружок членӗсем спектакль лартса памаҫҫӗ. Кӑҫал хӗл каҫа та 3—4 хут ҫеҫ спектакль пулчӗ. Агитбригадӑсем ӗҫлемеҫҫӗ.

Клубри библиотекӑра чӑвашла хаҫатсемпе журналсем, чӑвашла кӗнекесем сахал, вӗсенчен нумайӗшӗ ҫӗтӗлсе пӗтнӗ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали Положенисем ҫинчен вӗрентме партком комитечӗ уйӑрнӑ агитатӑрсенчен чылайӗшӗ барака пырса та кӗмеҫҫӗ. 25-мӗш номӗрлӗ ҫуртра пурӑнакан рабочисем хӑйсем патне ҫирӗплетнӗ агитатӑр камне те пӗлмеҫҫӗ. 8-мӗш ҫурт ҫумне ҫирӗплетнӗ агитатӑрсем Макарӑвпа Прокопйӗв йулташсем те Положенисене вӗрентес тӗлӗшпе мӗн пурӗ те 2 хутчен анчах пулнӑ.

Д. Иванов.

Колхоз активӗ вӗренӳре

Йелчӗк районӗнче колхоз активне заочнӑ вӗрентме тытӑннӑранпа виҫӗ ҫул иртрӗ. Ҫав вӑхӑтра 243 ҫын вӗрентсе кӑларнӑ.

Заочнӑ вӗренекенсем хӑйсен политикӑлӑ пӗлӳлӗхне хӑпартаҫҫӗ, куллен кӗнеке-хаҫат вуласа пыма хӑнӑхаҫҫӗ. Вӗренсе тухнисем нумайӗшӗ хальхи вӑхӑтра йалсовет тата колхоз председателӗсем, фермӑ пуҫлӑхӗсем, бригадирсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсенчен 15 ҫынна йулашки вӑхӑтра районта ответлӑ вырӑнта ӗҫлеме илнӗ.

Кӑҫал парткабинет ҫумӗнчи, Курнавӑшри, Тӑрмӑшри группӑсенче аван вӗренчӗҫ. Сӑмахран, Тӑрмӑшри группӑра Шемйаков, Иванов, Скворцов, Козлов йулташсем отличнӑ вӗренсе тухрӗҫ. Акӑ мӗн калать Тӑрмӑш йалӗнчи группӑра вӗреннӗ йалсовет председателӗ Федӑрӑв йулташ:

— Епӗ вӗренме тытӑниччен политикӑлӑ ыйтусене сахал пӗлеттӗмччӗ, ҫаванпа мана ӗҫлеме йа вӑртарахчӗ. Халӗ епӗ хамӑн пӗлӳлӗхе чылай ӳстертӗм.

Аслӑ Йелчӗк йалӗнчи группӑра вӗреневе начартарах организациленӗ, вӗреннӗ темӑсемпе конспектсем йӗркелӗ ҫырса пыман, ҫӳресе те начар ҫӳренӗ, ҫавӑнпа унта начартарах вӗренсе тухрӗҫ.

Колхоз активӗн заочнӑ вӗренӳне ҫитес ҫул тата лайӑхрах хатӗрленсе кӗтсе илмеле. Пирӗн районри колхозниксем:

— Колхоз активӗн курсӗнче вӗренекенсене вальли радиолекцисене Шупашкартан чӑвашла парсан аван пулӗччӗ, терӗҫ.

— Вӗренмели учебниксем чӑвашла пулсан пит аван пулӗччӗ, терӗҫ тата вӗсем.

А. Романӑв.

Колхозри хӑш-пӗр калтӑксем

Алманчӑри „12 лет Октября" колхоз (Трак р.) ҫуракинче кӑҫал агротехникӑлӑ ӗҫсене пурне те тӗрӗс туса пымарӗ. 4-мӗш бригадӑра 12 гектар ҫине алӑпа акнӑ хыҫҫӑн, тарӑн сухаласа витентернӗ пирки, вӑрлӑхсем пит сайра шӑтрӗҫ. Колхоз руководителӗсем выльӑхсене чуптарас ӗҫ ҫине те алӑ витӗр пӑхаҫҫӗ. Пурӗ 45 кӗсре чуптармала пулсан, пайанччен 14 кӗсре ҫеҫ чуптарса хӑварнӑ. Ӗне ферми те пит йапӑх ӗҫлет. Ӗнесене лайӑх пӑхман пирки вӗсем сахал сӗт параҫҫӗ.

И. Васильӗв.

Кӗске хыпарсем

Ершепуҫӗнчи „Трудовик" колхозра (Вӑрнар р.) пӗрремӗш бригадӑн чылайранпа ӗнтӗ конюх ҫук. Бригадӑна ҫирӗплетсе панӑ лашасене пӑхмаҫҫӗ. Лаша кирлӗ пулсан, колхозниксем хӑшӗ кӑмӑла кайать, ҫавна кӳлсе кайаҫҫӗ. Конюхра ӗҫлекенсене колхоз счетоводӗ тивӗҫлӗ ӗҫкунӗсене кирлӗ пек ҫырса пымасть.

А. Бурмистӑв.

Иккассинчи „Майӑн 1-мӗшӗ" колхоз (Шупашкар р.) 1934 ҫулта 10 гектар ытларах улмуҫҫи сачӗ лартрӗ. Малтанхи ҫулсенче улмуҫҫисем пит аван ӳсрӗҫ. Анчах та иртнӗ ҫул тата кӑҫал та сат хуралҫи Н. Фомин лайӑх пӑхман пирки, чылай улмуҫҫисем выльӑхсем кӑшлавипе хӑрса кайрӗҫ.

Н. Григорйӗв.

„Игӑрь полкӗ ҫинчен ҫырнӑ сӑмахӑн" историлӗ вырӑнӗсем тӑрӑх.
ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Путивль тӗп урамӗ. Малта Путивльри педагогикӑ училищинче вӗренекенсем.
Б. Дорофейӗв фото-ӳкерчӗкӗ.

Йалти суйлав агитацийӗ

ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет суйлавӗ умӗн пур ҫӗрте те—хуларан ҫеҫ мар, пирӗн аслӑ тӑван ҫӗршывӑри йалсенче те ӑнлӑхӗ, тарӑнлӑхӗ, револьуцийӗ ҫивӗчлӗхӗ тӗлӗшӗнчен халиччен пулман агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫ пулса пычӗ. Йалта—партири тата партире тӑман большевиксем, рйадовой колхозниксемпе колхозницӑсем чӗрӗ, конкретлӑ, йӑр уҫӑ, кашни ҫын патне ҫитекен, ӗнентерекен агитацин пит те паха тӗслӗхӗсене кӑтартрӗҫ.

1937 ҫулти суйлаври агитацилӗ ӗҫ чӑннипех массӑлӑ, халӑх ӗҫӗ пулчӗ. Вӑл йалта пурӑнакан халӑхсен пур сийӗсене те политикӑлӑ активлӑхне вӑратрӗ. Большевикла агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫӗн тӗп форми ССР Сойузӗн Конституцине, суйлав Положенине вӗренмели кружоксем пулнӑ. Йалти районсенче нумайӗшӗсенче политикӑлӑ кружоксенче пӗтӗм суйлавҫӑсенчен 90 проценчӗ вӗреннӗ.

Агитацилӗ ӗҫӗн тепӗр питӗ чаплӑ форми килте, колхозникӗн, йединоличникӗн ҫемйинче политикӑлӑ калаҫусем ирттерни пулнӑ. Тӗслӗхрен, Воронӗж облӑҫӗнчи Пескире тата Строжевойра, Усман районӗнчи ҫав йалсенче, йалти агитатӑр Конституци ҫинчен, коммунизмпе партире тӑманнисен сталинла блокӗ ҫинчен, тивӗҫлӗ суйлав округӗнче ҫав блок тӑрат на кандидат ҫинчен тӗплӗн калаҫа паманни пӗр суйлавҫӑ та йулман.

Кашни ҫын ҫине уйрӑмӑн пӑхмалли йӗркене ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет суйлавӗ умӗнхи агитацилӗ ӗҫри пек тӗплӗн пӑхӑнса ӗҫлени урах нихӑҫан та пулман. Богородск, Павлӑвск районӗсенче (Горький облӑҫӗ), Воробиовск районӗнче (Воронӗж облӑҫӗ), ҫӗршыври тата ытти нумай районсенче Конституцине тата суйлав саккунне вӗренмели кружоксенче политикӑпа пӗр пекрех пӗлекен, хутла пӗр пекрех пӗлекен ҫынсем тӑнӑ.

Пуриншӗн те паллӑ,—иртнӗ суйлаври агитацилӗ ӗҫӗн паха опычӗпе Сойузлӑ тата автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсене суйлама хатӗрленнӗ чухне те усӑ курмала.

Хальхи суйлава хатӗрленесси уйхирти чылай ӗҫсемпе пӗр вӑхӑтра пулса иртет. Ҫураки хыҫҫӑнах кӗрхи тырӑсене ҫумкурӑксенчен тасатас, ҫӗртме тӑвас, сахӑр кӑшманӗсене сайралатас, купалас тата ыт. ӗҫсем пуҫланса кайаҫҫӗ. Йалти ҫитӗннӗ ҫынсенчен 8 пайӗнчен 7 пайӗ уйхирсенче ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, суйлав умӗнхи агитацилӗ ӗҫе тумалли тӗп участкӑсем халӗ ӗнтӗ вунпилӗк-ҫирӗм килсем, колхозсен вулав ҫурчӗсем, клубсем мар, у хир и тапӑрсем, канмалли вырӑнсем, бригадӑсем, звенӑсем пулаҫҫӗ.

Ку вӑл агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫсен формисене ҫуллахи условисене майлӑ тума ҫеҫ мар, ҫак ӗҫӗн содержанине те урӑхлатма хушать. Суйлав агитацийӗ йалти хуҫалӑхлӑ ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем—тырпула пухса кӗртме-сталинла вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешмели татӑклӑ тапхӑра лайӑх хатӗрленме пулӑшмала.

Хальхи суйлав кампанийӗ ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет суйлав кампанинчен ҫакӑнпа арасна—парти организацисен производствӑлӑ утасткисем ҫине пуринчен ытла ҫаварӑнса пӑхмала, мӗншӗн тесен халӗ суйлавҫӑсен чи пысӑк пайӗ уйра пулать, унта ӗҫлет.

Паллах, уйра чи хӗрӳлӗ ӗҫ пынӑ вӑхӑтра та йалта старикӗсем, карчӑксем; йавӑрҫын хӗрарӑмсем, нумай ачалӑ хӗрарӑмсем йулнине манма йурамасть. Вӗсем хушшинче большевикла агитаци ӗҫне куллен туса пымала, ӑна вӑйсӑрлатмалла мар. Анчах агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫӗн тӗп вырӑнӗ уйра пулмала. Ҫакӑн пек лару-тӑрӑва партин районти тата йалти чылай организацисем шута илмеҫҫӗ-ха. Йалти нумай районсенче агитацилӗ массӑлӑ ӗҫе уйхирте ӗҫ хӗрсе пынӑ вӑхӑтра вӑйсӑрлатаҫҫӗ.

Агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫе ҫавӑн пек вӑйсӑрлатни чылай районсенче курӑнать. Краснодар крайӗнчи Славйанск районне илӗпӗр. Иртнӗ кӗркунне ку районта ССР Сойузӗн Конституцине тата суйлав саккунне вӗрентекен кружоксем ҫине тӑрса ӗҫленӗ, суйлавҫӑсен ушкӑнлӑ тата пӗрлешӳлӗ пухӑвӗсем часчасах пулнӑ, килсенче, урамсенче, фермӑсенче агитатӑрсем ҫӗршер ҫын ӗҫленӗ. Халӗ кружоксенче вӗренме колхозниксенчен висӗмӗш пайне ҫеҫ хутшӑнтарнӑ, организациленӗ кружоксенче те ӗҫсем йӗркелӗ пулса пымаҫҫӗ.

Партин станицӑри организацийӗсем, ку тарана ҫитсе те хуҫалӑхлӑ, производствӑлӑ ӗҫе халӑх хушшинчи политикӑлӑ воспитани ӗҫӗпе ҫыхӑнтарма вӗренсе ҫитменскерсем, партире тӑман пит ырӑ агитатӑрсене ҫухатса пӗтернӗ. Кунта уйхир ӗҫӗ вӑхӑтӗнче хаҫатсене саспа вуласа пама пулать, кружоксенче вӗренессине, суйлавҫӑсемпе куллен тата тӗплӗн калаҫассине пушӑ вӑхӑт пуличчен хӑварма йурать, тесе шутлаҫҫӗ. Йулташсем ҫуракипе ҫӗртме тӑвас ӗҫсем хушшинче, ҫӗртме тӑвас тата ҫумҫумлас ӗҫсем хушшинче пушӑ вӑхӑт пуласса кӗтеҫҫӗ, тумасӑр йулнӑ ӗҫсене ҫав кунсенче туса ҫитерме шутлаҫҫӗ.

Ҫакнашкал практикӑ вӑл ниме йурӑхсӑр! Иртнӗ ҫулсенчи пекех нимӗнле пушӑ вӑхӑтсем те пулмаҫҫӗ. Массӑлӑ ӗҫе йаланах туса пымала.

Суйлав агитацийӗ ҫине ҫаварӑнса пӑхманни Воронӗж, Курск, Рйазань облӑҫӗсенчи хӑшпӗр районсенче те сисӗнет: Кунта ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет суйлавӗнче коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗн чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсем ҫинчен, пысӑк ӗҫсем туса ирттерне пиншер талантлӑ агитатӑрсем ҫинчен нумай калаҫаҫҫӗ, анчах агитатӑрсен пысӑк ҫарне иртнӗ суйлавччен виҫӗ уйӑх малтан ӗҫе хутшӑнтарнине манаҫҫӗ.

Халӗ ҫав агитатӑрсенчен нумайӗшӗ, вӗсене йертсе пыман, пулӑшман пирки, нимӗн те тумаҫҫӗ.

Ҫав вӑхӑтрах Украинӑри, Горькийри тата Ленинград облӑҫӗсенчи районсем нумайӗшӗ иртнӗ ҫулти агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫӗн опычӗсемпе хальхи производствӑлӑ-йалалӑ условисене килӗшӳлӗн усӑ курса, агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫе тата ҫӳле ҫӗкленӗ.

Ҫапла, сӑмахран, Николайӗвск облӑҫӗнчи Баштанск районӗ. Унта ку таранччен ӗҫленӗ агитатӑрсене ҫеҫ мар, уйхирсенче, тапӑрсенче, звенӑсенче политикӑлӑ массӑлӑ ӗҫе тума колхозниксене, колхозницӑсене ҫӗнӗрен ҫӗршер ҫын хутшӑнтарнӑ. Сакӑр ҫӗр агитатӑр ытла кружоксене йертсе пыраҫҫӗ, калаҫусем туса ирттереҫҫӗ, докладсем тӑваҫҫӗ, стена хаҫачӗсем кӑларасҫӗ, ыйтусемпе ответсен каҫӗсене организацилеҫҫӗ. Районти тата колхозри пропагандистсем семинарсемпе консультацисене йӗркелӗ ирттереҫҫӗ. Кунти коммунистсем колхозри библиотекӑсене, радиоприйомниксене уйа илсе тухнӑ.

Суйлав кунӗччен вӑхӑт нумай йулмарӗ. Ҫулла уйри ӗҫсен уйрӑмлӑхӗсене шута илмен партин йалти организацийӗсем, суйлавҫӑсем нумай ҫӗрте агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫе организацилеменнисем суйлава хатӗрленмесӗр пыраҫҫӗ. Вӑхӑт кӗтмест. Вӑрах пулма йурамасть. Агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫе—уйа, участкӑна, бригадӑна, звенона! Агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫе ҫапла йӗркелесе йани сойузлӑ тата автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсен ҫитес суйлавӗнче коммунистсемпе партире тӑманнисен сталинла блокне тата ытларах ҫирӗплетме пулӑшать.

„Правда".

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвĕ

Ийунĕн 1-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ,—ларăва В. М. Молăтăв йулташ йертсе пынă. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССР Сойузĕн Госплан председателĕн Вознесенски йулташăн доклачĕ тăрăх **халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи виççĕмĕш кварталти планне** пăхса тухнă. Кăçалхи çулталăкăн иртнĕ пайĕнче, иртнĕ çулхи çав уйăхрисемпе танлаштарсан, промышленнăç продукцине ӳстерессин хăвартлăхĕ уйăхран уйăха, пĕр татти-сыпписĕр ӳсĕмне палăрса тăрат. Çапла, сойузлă тата сойуз-республикăлă промышленнăç халăх комиссариачĕсен промышленнăçĕнчи продукци иртнĕ çулхи йанвар, февраљ, март, апрел уйăхĕсенчипе танлаштарсан 1938 çулхи йанвар уйăхĕнче 5,6 процент, февраљте 9 процент, мартра—12 процент, апрелте—15 процент ӳснĕ.

Халăх хуçалăхĕн кăçалхи виççĕмĕш кварталти планĕ тăрăх промышленнăç продукцине малала ӳстерме палăртнă. Сойузлă, сойуз республикăлă промышленнăç халăх комиссариачĕсен тата вырăнти промышленнăç халăх комиссариачĕсен промышленнăçĕн продукцийĕ виççĕмĕш кварталта 22 мĕлйард та 530 мĕлйун тенкелĕх (1926—27 çулсенчи улшăнман хакпа) пулмала. Вăл ĕнте кăçалхи çулталăк планĕн 25,7 процентĕ пулат тата иртнĕ çулхи виççĕмĕш кварталтипе танлаштарсан 28 процент ӳсĕм парат.

Кăçалхи виççĕмĕш кварталта иртнĕ çулхи виççĕмĕш кварталтинчен-çĕр кăмрăкĕ 17 процент, хурçă—18 процент, йалхуçалăх машинĕсем—67 процент, велоçипедсем икĕ хут ытларах, резинă калушсемпе ытти тахăнмали йапаласем—65 процент, пусма таварсем 20 процент нумайрах туса кăлармала.

Капиталљнăй ĕçсем виççĕмĕш кварталта 12.659 мĕлйун тенкелĕх тума палăртнă.

Ваккăн тавар сутасси кăçалхи виççĕмĕш кварталта иртнĕ çулхи виççĕмĕш кварталтипе танлаштарсан 13,4 процент ӳсет.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ халăх хуçалăхĕн кăçалхи виççĕмĕш кварталти планне çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Мурман облăçĕ

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиум Указĕпе Пĕтĕм Росçийă Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Мурман облăçĕ тата унăн центрĕ Мурман хулинче тăвасси çинчен йышăннă постановленисене çирĕплетнĕ.

* * *

Мурмăн облăçĕ тунă май Пĕтĕм Росçийă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ Мурмански округа пĕтерме йышăннă.

(ТАСС).

Утă çулма пуçланă

Совет Сойузĕн кăнтăр йенчи районĕсенче утă çулма пуçланă. Утăна Кавказ лешйенчи республикăсене, Орджоникидзе крайĕнче, Казах ССРеспубликĕнче, Вăтам Азири республикăсенче çулаççĕ.

Совет Сойузĕнчи колхозсем кăçал 50 мĕлйун гектар çинчен хăй тĕллĕн ӳсекен курăк тата 8 мĕлйун гектар çинчен уйхирте акнă курăк çулса илеççĕ. Кăçал утă лайăх пулнипе колхоз выљăхĕсене тăрантарма ытлашшипех çитмелле.

(ТАСС)

Ударниксем канмали çуртра

СЕНТЕРВĂРРИ. Есмĕлти „Бољшевик“ промысла ертелĕ çуллĕн вăйланса пырат. Хаљ ертелĕн чăпта çапакан, атă-пушмак çĕлекен тата тĕрĕ тĕрлекен цехсем лайăх ĕçлеççĕ. Çав цехсенчи ударниксене виçĕ çынна—П. Йефимăв, М. Анçимăв тата Й. Матвейĕвă йулташсене канмали çурта йачĕç. Вĕсем ĕç нормине йаланах 100 процентран ирттерсе тултарса пынă.

М. А.

Уçă сывлăшра (Шупашкар).

Мохов фотоӳкерчĕкĕ.

Кружок çитĕнĕвĕсем

Шупашкарти коммуналлă строителствă техникумĕнче 1934 çулта шашкăла-шахмăтла выљăкансен кружокĕ организациленĕ.

Тăватă çул хушшинче кружок вăйлă шашиссем чылай хатĕрлерĕ. Никитин, Борисăв тата Петров йулташсем шашкăла выљăкансен Пĕтĕм Сойузри III-мĕш категорине илнĕ. (Вĕсемсĕр пуçне Чăваш республикĕнче III-мĕш категори илни Кириллăвпа Хохлов йулташсем çеç). Иванов, Поликарпăв, Бронин, Алексĕйĕв тата Федăрăв йулташсем—IV категори илнĕ. 80 çын ытла V категори илнĕ.

Кăçал техникумри шашиссем „Правда“ общĕствин шашисĕсемпе выљаса 8:1 шутпа çĕнтернĕ. Кооптехникумри шашиссенчен 6,5:3,5 шутпа выљаса илнĕ.

Шашкăла выљакансен Чăваш республикĕнче кăçал пулакан VII-мĕш турнирĕнче кружокран 3 шашис—Аркади Никитин, Герман Иванов, А. Борисăв выљаççĕ. Вĕсем хаљ турнира хатĕрленеççĕ.

Г. Иванов.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕ тăрăх

* Пайанхи куна Чăваш республикĕнче 71 вăтам шкул шутланат. Çав шкулсенчен кăçал 1000 ача вĕренсе тухаççĕ. Хулари вăтам шкулсенчен 200 ача, районтисемпе йалти вăтам шкулсенчен—800 ача вĕренсе тухаççĕ. Вĕренсе тухакансем пурте аçлă шкулсене кайма хатĕрленеççĕ.

* Вĕренекен ачасен шучĕ çултан-çулах ӳссе пынă пирки, халъхи вăхăтра ĕçлекен шкулсен хисепĕ çителĕксĕррине шута илсе, Чăваш республикĕнчи Çутĕç Халăх Комиссариачĕ кăçал тата тепĕр 10 вăтам шкул уçат. Çав шутран: Патăрйел, Йĕпреç, Кувакинă, Трак, Шупашкар, Шăнкăртам, Йетĕрне районĕсенче тата Шупашкарпа Улатăр хулисенче уçăлаççĕ.

Çапла вара çитес çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчен пуçласа пирĕн Чăваш республикĕнче 81 вăтам шкул ĕçлеме пуçлат.

* Пайанхи куна пирĕн Чăваш республикĕнче 8 педучилищă ĕçлет. Унта мĕн пурĕ 2849 çын вĕренет.

Кăçал çав 7 педучилищăран 765 çын вĕренсе тухаççĕ. Вăл шутран: физкуљтура инструктăрĕсем—21, библиотекă ĕçĕпе ĕçлекенсем—23, шкула кайма çул çитмен ачасем хушшинче ĕçлекенсем—31. Ыттисем шкулсенче учителсем пулма вĕренсе тухаççĕ. А. Николайĕв.

Йулашки почтăран

Ĕненме йăвăр, анчах çапла

Суйлав кампанийĕ хĕрсе пырат. Тăван çĕршывăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсене, партири тата партире тăман бољшевиксене РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен депутатне суйлама кандидата тăратнă. Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ тăратнă кандидатсене округсенчи суйлав комиççисем регистрациленĕ. Халĕ çав кандидатсемшĕн агитацилес ĕç саралса пырат.

Çак политикăла, историлĕ пысăк ĕçре—бољшевикла пичетĕн масса пуçĕнче пымала, агитаципе пропагандă ĕçне анлăн сармала. Пирĕн хаçатсемшĕн, пичет ĕçĕнче ĕçлекенсемшĕн суйлав кампанине активлăн хутшăнассинчен чаплăрах задачă пайанхи кун урăх çук. Анчах та Вăрмар районĕнчи „Трактăр“ хаçат тата унта ĕçлекен йулташсем суйлав кампанине активлăн хутшăнасси хăйсен ĕçĕ мар, тесе шутлаççĕ пулмала. Хаçат РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама палăртнă кандидатсем çинчен нимĕн те çырмаст. Орденоносĕц И. А. Александрăв йулташа ЧАССР Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата тăратни çинчен тата унăн кандидатурине регистрацилени çинчен пичетлесе кăларнисĕр пуçне, урăх пĕр сăмах та çырман. Хаçатра суйлав комиççисен, доверăннăйсен, агитатăрсен, общĕствăлă организацисен ĕçĕсене çутатса çырнине тупма çук.

„Суйлав кампани иртсе пынине çутатас тĕлĕшпе „Красная Чувашия“ хаçат та Вăрмар районĕнчи „Трактăр“ хаçатран малтах тăмаст. „Красная Чувашия“ хаçат суйлав кампани пуçланиччен те тата суйлав кампанийĕ пур çĕрте те анлăн саралса пынă вăхăтра çавара шыв сыпса ларат. Хаçат ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă нумай кандидатсем çинчен пĕр сăмах хушмасăр иртсе кайнă. Халĕ те, суйлав кампани хĕрсе пынă вăхăтра, суйлава хатĕрленесси çинчен сайра хутра çеç асăнса илет. Округсенчи суйлав комиççисен материалĕсене пичетленĕ хыççăн, „Красная Чувашия“ хаçат хăйĕн ĕçĕ пĕтрĕ, тесе шутларĕ пулмала. „Красная Чувашия“ хаçат редакцийĕ коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ тăратнă кандидатсемшĕн агитацилес ĕçе пачах хакламанни питех те тĕлĕнтерет вара.

Промышленнăç кунĕ

Вакунсем

Канашри вакунсем йуçакан савăт (директăрĕ Стойăн йулташ) май уйăхĕн программине çапла пурнăçлавă: вакунсем кăларассине 72,3 процент, кустăрмасем тӳрлетессине 72,7 процент, рессорсем тӳрлетессине 75 процент тултарнă.

Уйрăм цехсем май уйăхĕнче программăна çапла тултарнă: тимĕрç цехĕ (цех начаљникĕ **Назарăв** йулташ)—126,8 процент; механически (цех начаљникĕ Гуљайĕв й-ш)—109,5 проц., йăвăç каскалакан цех (цех начаљникĕ **Кисљаков** йулташ)—80,6 процент.

Кирпĕч

Май уйăхĕн программине Шупашкарти кирпĕч савăчĕ (директăрĕ **Сташов** йулташ)—56,6 процент, Иванăвăри (директăрĕ **Иванов** йулташ)—69,7 цроцент тултарнă.

Выљав укçине тӳлени

Шупашкар хулинчи перекет касси кăçалхи майăн 25-мĕшĕнче иккĕмĕш пилĕкçуллăх (тăваттăмĕш çулхи кăларăмĕ) займăн сиччĕмĕш тиражĕ тăрăх тухнă выљав укçине тӳлеме тытăннă.

Майăн 25-мĕшпе ийунĕн 1-мĕш хушшинче перекет касси 21.420 тенкĕ выљав укçи тӳленĕ те ĕнтĕ.

Пĕлтерни

Пайан, ийунĕн 3-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре Çыхăну çурчĕн клубĕнче Шупашкар хулинче хаçат-журналсем саракан уполномочĕннăйсен канашлăвĕ пулат.

КУН ЙĔРКИНЧЕ:

Иккĕмĕш çурçулăха хаçат-журналсем çырăнса илессине организацилесси çинчен.

Сойузпичет.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Хӳсанти М. Горький йачĕпе тăракан

Коммуналă строителствă

ИНЖЕНЕРĔСЕН ИНСТИТУЧĔ

(Казань, ул. К. Маркса, 68).

1938 çулта пĕрремĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Институт анлă професçилĕ инженер-строителсене хатĕрлет.

Специаљнăй факуљтетсем: граждăнла, промышленнăç тăрăх тата хулари çулйĕр ĕçĕнче ĕçлекен инженер-строителсем.

Вĕренме 17 çултан пуçласа 35 çула çитнисене, вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисене илеççĕ. Зайавленисене ийунĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Зайавленипе пĕрле автобиографи, вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестатăн подлинникĕ, сывлăх пирки свидетелствă тата çара пуçăн ӳкернĕ виçĕ фотокартăчка кирлĕ. Паспăрта пĕрле илсе пымала.

Испытанисем августăн 1-мĕшпе 20-мĕш хушшинче çак предметсемпе пулаççĕ: вырăс чĕлхипе, математикăпа, физикăпа, химипе, политграмăтăпа, рисованипе, черченипе тата йутçĕршыв чĕлхипе. Испытанире ыйтакан предметсем тăрăх ийулĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа консуљтацисем организациленĕ.

Испытанине килнисем валљи обшчежити тата столовăй пулат. Вĕренме кĕмели условисене Институтăн вĕренӳ пайĕнче кашни кунах кăнтăрла 1 сехетрен 4 сехетчен ыйтса пĕлме пулат.

Çав вăхăтрах институт çумĕнчи заочнă вĕренмели уйрăма та асăннă специаљнăçсене хатĕрлекен факуљтетсене çав условисемпех илеççĕ.

Заочнă вĕренмели уйрăмра тӳлевсĕрех вĕрентеççĕ, кĕрес текенсен çулĕсене пăхмаççĕ.

Адрĕс: Казань, ул. К. Маркса, 68, Институт инженеров Коммунального строительства им. М. Горького.

ДИРЕКЦИ.

2—1

„Сойузкинопрокат“ăн Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ

Екрансем çинче кăтартма кăларат

„КОМСОМОЉСК“

САСЛĂ, ИЛЕМЛĔ ÇĔНĔ ФИЉМ

Сценарий: З. Маркинă, М. Витухновски, С. Гераçимăв.

Режиççор С. Гераçимăв.

„Ленфиљм“ хапрăкĕ туса кăларнă.

Хаçатсем çинче тата радио тăрăх пĕлтернисене асăрхăр!

СУККĂРСЕНЕ ВĔРЕНТМЕЛИ

Улатăрти туллимар вăтам шкул

ВĔРЕНЕКЕНСЕНЕ ЙЫШĂНАТ

Шкула Чăваш республикĕнче пурăнакан суккăр ачасене 8 çулхисенчен пуçласа 11 çулхисем таран йышăнаççĕ. Туллимар вăтам шкул программи тăрăх вĕреннисĕр пуçне ачасене тата ытти ĕçсене, музыкăна вĕрентеççĕ.

Вĕренме йышăннă ачасене тăрантараççĕ, тумлантараççĕ. обшчежитисенче усраççĕ тата ыт. йенчен те пулăшаççĕ. Вĕренме кĕме çак документсем кирлĕ:

Зайавлени, миçе çулхине кăтартакан справкă (метрикă хучĕ) сывлăх пирки тата куç мĕнле курнине йе пачах курманнине кăтартакан тухтăртан илнĕ справкă.

10 процентран ытларах куракансене суккăрсен шкулне йышăнмаççĕ

Зайавленисене документсемпе пĕрле çак адрĕспе йамала:

гор. Алатырь, Чуварлейский бор. Республиканская школа слепых.

Зайавленисене ийунĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа августăн 25-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Заљатисем 1938 çулхи çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

3—1 ДИРЕКЦИ.

Чăвашсен Государствăн Çĕрпӳри

ФЕЉДШĔРСЕН ШКУЛĔ

1938—39 вĕренӳ çулĕнче фељдшĕрсен уйрăмне 1-мĕш курса вĕренекенсене илет

Вĕренмели срук 3 çул. Пур граждăнсем те 19 çулхисенчен 35 çулхисем таран. малтан вăтам шкулта 7 клас программи чухлĕрен кайа мар пĕлӳ илнисем ку шкула вĕренме кĕме пултараççĕ.

Зайавленисене ийунĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен 20-мĕшĕччен пулаççĕ.

Вĕренме илнисене стипенди параççĕ, обшчежити пур.

Зайавленисене шкул директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле йамала:

Хăш çулта çуралнине кăтартакан справкă,

Малтан вĕренни çинчен справкă;

Сывлăх пирки справкă:

Икĕ фото-картăчкă (алпусса çирĕплеттермеле);

Çар тивĕçлĕхне кăтартакан справкă;

Паспăрта пĕрле илсе пымала.

Кирлĕ документсене пурне те тăратмасан зайавленийе пăхмаççĕ, чĕнмесĕр испытанийе пырсан, испытанийе тăратмаççĕ,

Фељдшĕрсен шкулне вĕренме кĕрекенсене туллимар вăтам шкул программи тăрăх испытани тăваççĕ: вырăс чĕлхипе, физикăпа, математикăпа, литературă, политграмăтă; тата географипе.

7 çуллă, 10 çуллă шкулсене, техникумсене, медицинă вăтам шкулĕсене, рабфак пĕтернисене, вĕсем отличнă паллăсемпе вĕренсе тухнă пулсан, испытанисĕрех илеççĕ.

Испытани тытнисене августăн 21-мĕшĕнчен 25-мĕшĕччен студентсен шутне кĕртеççĕ. Заљатисем çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Шкул адресĕ: ЧАССР, г. Цивильск, Б. Советская ул. д. № 60.

2—1 ДИРЕКЦИ.

„КАПКĂН“

ЖУРНАЛ МАЛАШНЕ

(ийуљрен пуçласа) уйăхра

икшер хут тухма пуçлат

ХАКĔ ÇАВАХ:

уйăха—40 пус; çурçула 2 т. те 40 п.: çулталăка 4 т. 80 пус.

„КАПКĂН“ журнал редакци.

3—1

Хваттерсем кирлĕ

хак килĕшӳ тăрăх

Çак адрĕспе пĕлтермеле: улица Карла Маркса, 32а, Сойузкинохроника. Телефон № 3—12.

3—2

Пайан кино-театрта

Саслă, çĕнĕ, кино-драмă

„КОМСОМОЉСК“

ССР Сойузĕн Оборонине

тĕреклетмели займ облигацисене алла илĕр!

„ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займа“ илме çырăннă рабочисемпе служăшчисем çак çулхи апрелĕн иккĕмĕш çур уйăхĕшĕн ĕç укçи илнĕ чухне займшăн йулашки тӳлеве парса татрĕç. Учрежденисенчи, предприйатисенчи булгалтерисем йулашки тӳлеве илсе татнă чухнех займа çырăнакансене займ облигацисене пачĕç.

Колхозниксене тата хресчен-йединоличниксене, займ тăрăх йулашки тӳлеве парса татнă чухнех йалсовечĕсем облигацисене алла панă.

Займ илме çырăннисене валеççе парайман облигацисене учрежденисемпе предприйатисенчи бухгалтерисем тата çавăн пекех йалсоветсем перекет кассисене панă.

„ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займ“ илме çырăннă граждăнсем, çак вăхăта çитсе мĕнле те пулин сăлтавпа займ облигацине алла илеймен пулсан, хăйсем çырăннă вырăнта, перекет кассисенчен илме пултараççĕ.

Облигацисене илме рабочисемпе служăшчисен учрежденисемпе предприйатисем займшăн мĕнчухлĕ тӳленине ĕнентерсе панă справкăна тата колхозниксемпе хресчен йединоличниксен займшăн тӳленĕ хыççăн алла илнĕ квитанцисене тăратмала.

Учрежденисемпе предприйатисенчи бухгалтерисем тата йалсоветсем облигацисене перекет кассине панă чухне займ илме çырăннисем çумне облигаци номерĕсене çирĕплетмен. Çавăнпа та займ илме çырăннисем облигацисене алла иличчен займ тăрăх пулакан выљава хутшăнаймаççĕ.

Государствăн перекет кассисемпе Государствă Кивçенлĕхĕн Тĕп Управленийĕ.

РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн

СЕНТĔРВĂРРИНЧИ

ÇĔРЙĔРКЕЛӲПЕ МЕЛИОРАЦИ ТЕХНИКУМĔ

Гидротехничĕски тата çĕрйĕркелӳ уйрăмĕсен I-мĕш курсне студентсене илет

ГИДРОТЕХНИЧЕСКИ уйрăм çаксене вĕрентсе хатĕрлет: гидротехникăла строителствăсенче ĕçлекен техниксене, шывлă-шурлăхлă вырăнсене типĕтес, шăварас тата искуственнăй майпа çăмăр çутарас тĕлĕшпе ĕçлекен техниксене. Социалисăмлă йалхуçалăхне валљи шыв пăрки (водопровод) хывас тĕлĕшпе ĕçлекен техниксене.

Çĕрйĕркелӳ уйрăмĕ вĕрентсе хатĕрлет: геодезилĕ ĕçсене лайăх пĕлекен, МТС-сен, совхозсен тата колхозсен çĕр участкисене палăртса пама пĕлекен тата пусуçавăрнăш пройектне тума пĕлекен çĕрйĕркелекенсене.

Вĕренмели срук 4 çул. 15 çулхисенчен пуçласа 30 çулхисем таран, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ. Испытанисем августăн 19-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕччен çак предметсемпе пулаççĕ: 1) Вырăс чĕлхи тата литературă, 2) математикă, 3) географи, 4) физикă, 5) ССР Сойузĕн Конституцийĕ.

1938 çулта туллимар вăтам шкулсенчен çулте кăтартнă предметсемпе отличнă вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

Зайавленисене çак адрĕспе йамала:

г. Марпосад, ЧАССР, Техникум землеустройства и мелиорации.

Пĕрле çак документсем кирлĕ: а) туллимар вăтам шкул пĕтерни çинчен свидетелствă (подлинник), б) сывлăх пирки справкă, в) хăш çулта çуралнине кăтартакан справкă, г) икĕ фотокартăчкă (çарапуçăн ӳкерттерсе, кашниин çине алпусса пĕр-пĕр учрежденире çирĕплеттермеле), д) Çар тивĕçлĕхне кăтартакан документ.

Вĕренме илнисене пурне те стипенди параççĕ тата обшчежити пулат.

3—1 ДИРЕКЦИ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 275

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 408.